ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

9 (4423) №, 2015, март /пуш/, 5
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ЧУН ĂШШИ

## Пахчари чечек пек ўсетĕп... атте-анне ăшшинче



Паян канмалли кун та кунĕпех пўртре тăрмашрĕ Маша. Тăрăша-тăрăша урай çурĕ, вĕтĕр-шакăра тирпейлерĕ, ытти ĕçпе аппаланчĕ. Амăшĕ евĕр Юлия Васильевна пекех тирпейлĕхе юратать çав вăл. Е тата ашшĕнех, Владимир Алексеевичах, илер-ха. «Пур япалан та çуртра хăйĕн вырăнĕ пулмалла», – тет. Йĕп кирлĕ пулсан, çĕрле те çутăсăрах ăна шыраса тупма пултарать вăл. Пăта е мăлатук, пуртă-пăчкă кирлĕ пулсан – вĕсем те паллă вырăнта. Хĕр ачана та аслисем мĕн пĕчĕкрен çакăн пек вĕрентнĕ. Пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем хуларан килсен те:

– Анне, атте, мĕн туса пулăшмалла? Халех пурте пĕрле ĕçе пуçăнăпăр, – тесе вĕсен умĕнче тĕпĕртетсе çеç тăраççĕ.

Ĕнтĕ Маша ĕçе вĕçлерĕ. Кун пирки амăшне пĕлтерес тесе тĕпел кукрине васкарĕ. Анчах юратнă çынни вырăнта курăнмарĕ. Газ плити çинче ларакан кастрюле уçса:

– Анчахрах кунтаччĕ вăл, каллех картише тухрĕ ахăртнех. Эх, аннем... Мĕн тери ырă та вашават çын эсĕ. Ялан ĕçлетĕн, ялан кăштăртататăн. Ларса канма пĕлместĕн... Хăв тутлă апат пĕçернĕха, ăна çиме авă вăхăту та çук, – тесе хĕр ача тĕпелтен тухса хăй пўлĕмне иккĕмĕш хута хăпарчĕ.

Пĕрремĕш кун çакăнта пулнăн йĕри-тавралла тинкерчĕ хĕрача. Килĕшет ăна хăйĕн пўлĕмĕ. Ашшĕн ылтăн алли ăсталанă ăна.

– Чим, хальлĕхе никам та кансĕрлемен чухне килти ĕçе пурнăçлам-ха. «Аттепе анне пуртан телейлĕ» сочинение вăхăтра çырса пĕтересчĕ, – тесе алла шурă хутпа ручка илчĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски шкулĕн хастар вĕренекенĕ Маша Конева.

➲➲➲ 6-мĕш стр.

## Суйлăр, çырăнăр, вулăр!

Тантăш

ТЕТТЕ игрушка

САМАНТ

*Мартăн 7-мĕшĕччен кăна «Хыпар» Издательство çурчĕн хаçат-журналне 2015-мĕш çулĕн иккĕмĕш çурринче илсе тăмашкăн йўнĕ хакпа çырăнтараççĕ. «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене те эсир çырăнмасăр юлмасса шанатпăр.*

# Тӗрлӗрен: вула та пӗл

## Халӑх шанӑҫӗ — ҫамрӑк ӑрура



«Чӗлхе пур – халӑх пур, чӗлхе ҫук – халӑх ҫук», – текен каларӑш нихҫан та хӑйӗн пӗлтерӗшне ҫухатмӗ. Кашни ҫыннӑн хӑйӗн тӑван чӗлхине яланах хисеплемелле, унпа мӑнаҫланмалла, упраса хӑварас тесе тӑрӑшмалла. Вӑл – халӑх пуянлӑхӗ.

Пӗтӗм тӗнчери тӑван чӗлхе кунне халалласа Шупашкарти 47-мӗш шкулта музыкӑпа литература каҫӗ иртрӗ. Ҫак уява тата тепӗр пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулӑмсемпе – Раҫҫейри Литература тата республикӑри К.В.Иванов ҫулталӑкӗсене уҫассипе ҫыхӑнтарнӑ. Савӑнӑҫлӑ уявра тӑван чӗлхе пахалӑхӗ ҫинчен каласа панӑҫ, кӑҫалхи ҫул пӗлтерӗшлӗ пулӑмсемпе пуяннине палӑртса хӑварчӗҫ. К.В.Иванов ҫырнӑ «Нарспи» поэма сыпӑкӗсем ҫав тери мӑнаҫлӑн та илемлӗн янӑрарӗҫ, куракансен чунӗсенче чӑвашлӑх туйӑмне вӑратрӗҫ.

ЧР тава тивӗҫлӗ учителӗ Геронтий Лукиянович ачасене аслӑ поэтмӑр К.В.Иванов пултарулӑхӗпе паллаштарчӗ, Константин Иванов М.Ю.Лермонтовӑн пултарулӑхӗпе кӑсӑкланнине, вырӑс поэчӗн темиҫе сӑввине куҫарнине палӑртса хӑварчӗ. Хӑйӗн сӑмахӗсене ҫирӗплетсе Константин Васильевич куҫарнӑ «Кӗрен парӑс» сӑввине тӗслӗх вырӑнне илсе кӑтартрӗ.

«Самант» журнал редакторӗ Владимир Васильевич Степанов ачасене чӑваш чӗлхи историйӗпе паллаштарчӗ. Куракансенче тӑван чӗлхе туйӑмне вӑратас тӗллевпе ятарлӑ вӑйӑ иртерчӗ. Вӑл китай чӗлхин сӑмахӗсене каларӗ, ачасем вара ҫав е ку сӑмахӑн пӗрпеклӗхне чӑваш лексикинче шырарӗҫ. Асӑннӑ вӑййа ачасем хаваспах хутшӑнчӗҫ. Унсӑр пуҫне куракансене Никита Родионов, Мария Осташкова тата Диана Смирнова шӑрантарнӑ чӑваш юррисем кӑмӑла кайрӗҫ.

Уяв савӑнӑҫлӑ ларура иртрӗ. Чӑваш чӗлхин аталанӑвӗн ҫул-йӗрне йӗрлени, чӑваш халӑх классикӗн пултарулӑхне урӑх енчен хаклани ачасемшӗн усӑллӑ пулни куҫкӗрет. Халӑх шанӑҫӗ – ӳсекен ӑрура. Тӑван чӗлхен ҫутӑ пуласлӑхӗ те вӗсенченех килет. Аслисем ачасен чӗрисенче чӑвашлӑх туйӑмне кӑвайтне чӗртсе ӑна ӗмӗрлӗхе сыхласа хӑварас тӗллевпе май килнӗ таран тӑрӑшӗҫ.

***Анастасия ВЛАДИМИРОВА.***

## Йӗпреҫсем малтисен йышӗнче!

Ҫак кунсенче республикӑра шкул ачисем хушшинче иртекен олимпиада вӗҫленчӗ. Вӗренекенсем пӗлӗвне ҫирӗп ытла предметпа тӗрӗслерӗҫ. Пирӗн шкултан район чысне тӑхӑр предметпа тӑватӑ вӗренекен тивӗҫлӗн хӳтӗлерӗҫ. Вунпӗрмӗш класри Катя Кошелева физкультура, ОБЖ, чӑваш чӗлхи тата литература, Анна Михайлова – ОБЖ, Дарья Михайлова – физкультура предмечӗсемпе мала тухрӗҫ. Ф.К.Скворцов, А.И.Кошелев вӗрентекенсем ачасен ҫитӗнӗвӗпе кӑмӑллӑ юлчӗҫ. Пирӗн шкултан виҫӗ вӗренекен республикӑри олимпиадӑра ҫӗнтерӳҫӗсен йышне кӗни пурне те хавхалантарчӗ.



***Юлия КОШЕЛЕВА, вӗрентекен.***

Йӗпреҫ районӗ, Ҫӑкалӑх шкулӗ.
**Сӑнӳкерчӗкре:** Аня Михайлова, Катя Кошелева, Даша Михайлова.

## Ӑшӑ саламсем

*Саламсене пӗлтермелли номерсем:*
**89876741833**
**89051975911**

Хаклӑран та хаклӑ, юратнӑ ҫыннӑмӑра, Патӑрьел районӗнчи Кӗҫӗн Чемен ялӗнче пурӑнакан **Раиса Алексеевна ГРИГОРЬЕВӐНА** ҫывхарса килекен Пӗтӗм тӗнчери Хӗрарӑмсен кунӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Яланах сывлӑх, телей, ӑнӑҫу тата ҫителӗклӗ пурнӑҫ сунатпӑр. Халхи пекех ӑшӑ кӑмӑллӑ, ырӑ чунлӑ пулсам яланах.

***Саламлаканӗсем: икӗ ывӑлӗ, икӗ хӗрӗ, кӗрӳӗсем, кинӗсем, мӑнукӗсем.***

✦ ✦ ✦

Етӗрне районӗнчи Ҫӗнӗ Етӗрне ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, халӗ Шупашкарта пурӑнакан хаклӑ ентешӗме, **Валентина Гурьевна ВАСИЛЬЕВӐНА,** черетлӗ ҫуралнӑ кунӗпе саламлатӑп. Ачаран ырми-канми ӗҫленекенскер пур ҫӗре те ӗлкӗрет. Ӑна чӗререн ҫирӗп сывлӑх, таса ҫӑлкуҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал, иксӗлми телей сунатӑп.

***Нина МИХАЙЛОВА.***

Элӗк районӗ,
Мӑн Карачура ялӗ.

✦ ✦ ✦

Элӗк районӗнчи Мӑн Карачура ялӗнче пурӑнакан, пур ӗҫре те маттур, хуҫалӑхра та ырми-канми тӑрӑшакан **Елена Георгиевна ЛОГИНОВА** ыран хӑйӗн 50 ҫулхи юбилейне паллӑ тӑвать. Эпир ӑна чунтан хисеплесе хурҫӑ пек ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу, пысӑк ӳсӗмсем сунатпӑр.

***Ял-йыш.***

Элӗк районӗ.

✦ ✦ ✦

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуршӑл шкулӗнче вӗренекен **Сашенька НИКОЛАЕВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Ҫурхи хӗвел пек ҫиҫтӗр сӑну, ӗмӗтӳсем пурнӑҫланса пыччӑр. Телейлӗ пул. Ӑнӑҫу, ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр.

***Салампа тӑванӗсем.***

✦ ✦ ✦

Юратнӑ аннене **Ангелинӑна**, аппана **Светланӑна**, йӑмӑксене **Любӑна, Ксение**, кукамая **Фелицатӑна**, асаннене **Людмилӑна**, мӑн асаннесене **Екатеринӑпа Марийӑна** Хӗрарӑмсен кунӗ ячӗпе чӗререн саламлатӑп, телей, вӑрӑм кун-ҫул, сывлӑх сунатӑп.

***Анатолий ШАБАЛОВ.***

Ҫӗмӗрле хули, 3-мӗш шкул.

## Елена Светлая сӑвӑҫпа – тӗлпулу



Нумай пулмасть эпир, иккӗмӗш «б», «в», «г» тата виҫҫӗмӗш «г» классем «Ракушка» шкул проекчӗпе килӗшӳллӗн Чӑваш наци библиотекинче пултӑмӑр. Унта Елена Светлая сӑвӑҫ асра юлмалли тӗлпулу иртерчӗ.

Елена Светлая ача-пӑча поэчӗ ҫеҫ мар, «Ҫумӑр» Чӑваш патшалӑх эксперимент драма театрӗн актриси те. Пӗтӗм Раҫҫейри тата Халӑхсен хушшинчи юрӑ-кӗвӗпе пултарулӑх конкурсӗсенчи «Илемлӗх сӑмахӗ» номинацинче лауреат ята ҫӗнсе илнӗ. Вӑл хӑйӗн интереслӗ хайлавӗсемпе, сӑввисемпе, юптарӑвӗсемпе паллаштарчӗ. Вӗренекенсем те юратнӑ сӑвӑ йӗркисене поэтпа пӗрле вуларӗҫ.

Ҫакӑн йышши мероприятисем яланах асра юлаҫҫӗ, савӑнӑҫ парнелеҫҫӗ. Елена Светлая пухӑннисене хӑйӗн хайлавӗсемпе кӑсӑклантарчӗ, поэзи тӗнчине «ертсе кӗчӗ». Сӑвӑ-хайлав вӑл рифмӑпа килӗшӳллӗн тӑракан сӑмахсем ҫеҫ мар. Унти кашни сӑмах тарӑн пӗлтерӗшлӗ пулнине туйса илме май пулчӗ ҫак кун. Автор кашни йӗркерех пурнӑҫа, ачасене юратни ҫинчен калани палӑрчӗ.

Тӗлпулу питӗ кӑсӑклӑ иртрӗ. Эпир ӗнтӗ асамлӑ юмах епле ҫуралнине те, илемлӗх хайлавӗсем ҫинчен те нумай пӗлтӗмӗр.

Юлашкинчен Елена Светлаяпа асӑнмалӑх сӑнӳкерӗнтӗмӗр. Хӑшӗ-пӗри автограф та илчӗ.

***Айдар АНДРЕЕВ.***

Шупашкар,
6-мӗш шкул.

Тантӑш
чӑваш ачисен хаҫачӗ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви; Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» Чӑваш Республикин хӑй тытӑмлӑ учреждением.

● ХАҪАТ ИНДЕКСӖ:
54802 - (ҫур ҫула) - Чӑваш Республикинче,
11466 - республика тулашӗнче.

● Редакципе издатель адресӗ:
428019, Чӑваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство ҫурчӗ" АУ техника центрӗнче калӑпланӑ."Чувашия" ИПК" ПУП типографийӗнче пичетленӗ.
428019, Чӑваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРӖ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТӖП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тӗп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, ҫырусемпе тата юнкорсемпе ӗҫлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайӗ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайӗ: | 56-11-80 |
| право, кӑмӑл-сипет пайӗ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВҪИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛӐПЛАВҪӐ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1799 экз.
ҫав шутра Чӑваш Республикин тулашӗнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 797
Пичете март уйӑхӗн 4-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

● ПИРӖН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантӑш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллӑпа реклама материалӗсене палӑртнӑ

Пичете графикпа 15 сехетре алӑ пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алӑ пуснӑ.

# Çĕре хĕвел илем кӳрет, çынна – ĕç

*Учителĕн ĕçĕ пит йывăр.*
*Атте те, анне те пулан.*
*Анне-тĕк – выртса эс ан çывăр,*
*Атте-тĕк – выртса эс ан кан.*
**Валентин УРТАШ.**

Çĕр çинче професси нумай: учитель, летчик, повар, тракторист, тухтăр тата ытти те. Кашни професси хăйне евĕрлĕ, интереслĕ. Тухтăр çынсене сыватать, повар апат пĕçерет, çĕвĕçĕ вара хитре кĕпе тум-тир çĕлет. Пурнăçра пур професси те кирлĕ. Ăна кашни çын хăйĕн пултарулăхне кура суйласа илет. Лайăх специалист пулма вĕренсе тухать. Нумай çул хăйĕн ĕçĕнче вăй хуракан чăн-чăн ăста пулса тăрать.

Пурнăç çултан çул аталанса пырать. Халĕ çĕнĕ йышши професси нумай: менеджер, ЭВМ операторĕ, продюсер, сутуçă-консультант тата ытти те.

Манăн анне – вĕрентекен. Ку вăл – чи кирлĕ ĕç тесе шухăшлатăп. Учитель кашни çын пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварать. Тухтăр е повар, тракторист е летчик, ученăй е инженер – пурне те учитель вĕрентнĕ.

Манăн пĕрремĕш вĕрентекен – Татьяна Моисеевна Кузнецова. Шăпах вăл пуçласа саспаллисемпе паллаштарчĕ, вулама, хут çине шăрçа пек хитре çырма, шутлама вĕрентрĕ.

Халĕ эпир пиллĕкмĕш класра. Пире тĕрлĕ учитель вĕрентет. Эпир çутçанталăк, информатика, истори, акăлчан, вырăс, чăваш чĕлхисене вĕренетпĕр. Тĕрлĕ учителĕн специальноçĕсемпе паллашатпăр. Кашнийĕ хăйĕн чунне парса пире ăс парать.

Манăн анне, Елена Мефодьевна Васильева, чăваш чĕлхипе литературине тата тăван ен культура урокĕсене ертсе пырать. Иртнĕ çулсенче вăл истори предметне те вĕрентнĕ. Унăн вĕренекенĕсем районти олимпиадăсене хутшăнаççĕ. Вăл ачасене тăван халăха тата тăван чĕлхене юратма, хисеплеме вĕрентет. Хальхи пурнăçра учителĕн анлă тавракурăмлă пулмалла, хăйĕн пĕлĕвне кунсерен ӳстерсе пымалла. Çавăнпа анне нумай кĕнеке вулать, компьютерпа усă курать. Пĕлĕвне ӳстерес тесе семинарсемпе ятарлă курссене çӳрет. Хăйĕн предметне лайăх пĕлекен педагог çеç ачасене тарăн пĕлӳ пама пултарать. Учитель ачасен ашшĕ-амăшĕпе те ĕçлет. Вĕсемпе тачă çыхăну тытать.

Уроксем ирттерсе пĕтерсен те ахаль లармасть. Шкулти мероприятисене йĕркелет, ачасемпе тĕрлĕ конкурс, викторина, концерт ирттерет. Вĕсемпе похода, экскурсисене çӳрет. Учитель ачасене тĕрĕс пурнăç çулне суйлама вĕрентет. Шкул ачисем аннене юратаççĕ, хисеплеççĕ. Вăл ачасене кирек мĕнле темăна та лайăх ăнлантарса парать, тĕрлĕ ыйтăвăн тĕрĕс хуравне тупма пулăшать.

Аннен профессийĕ мана питĕ килĕшет. Мĕншĕн тесен вăл интереслĕ.

Эпĕ аннен ĕçне малалла тăсасшăн. Çавăнпа та халь шкулта лайăх вĕренме тăрăшатăп.

Педагог ĕçĕ çăмăл мар. Унта сăпайлăх, чăтăмлăх кирлĕ. Учитель ăшă та пысăк чунлă, ачасене чунтан юратакан, хăйĕн ĕçне паракан çын. Вăл пĕтĕм вăйне тата вăхăтне вĕренекенсене парать.

«Çĕре хĕвел илем кӳрет, çынна – ĕç», – тесе ахальтен каламан-çке ваттисем.

**Анна ВАСИЛЬЕВА.**

Канаш районĕ,
Усырма шкулĕ.



© *Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ӳкерчĕкĕ.*

# Юратнă кукамай



Манăн кукамай 69 çулта. Алевтина Гавриловна Муркаш районĕнчи Шаптак ялĕнче пурăнать. Кукамайпа кукаçи 4 ача пăхса ӳстернĕ. Вĕсем пурте аслă пĕлӳ илнĕ.

Юратнă çыннăм нумай çул шкулта учительте ĕçленĕ. Вăл ачасене вырăс чĕлхине вĕрентнĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура.

Кукамайăм питĕ пултарулă çын. Вăл тĕрлĕрен алĕс тума пĕлет тата тутлă апат-çимĕç пĕçерет. Хĕлле вара йĕлтĕрпе ярăнма юратать. Çулла вăрмана кăмпа, çырла пуçтарма çӳрет. Кукамай кăмпасем çинчен те питĕ нумай пĕлет. Мана каласа парать, вĕсемпе паллаштарать.

Унăн пушă вăхăт сахал. Çу кунĕсенче пахчаран тухма та пĕлмест. Вĕсен пахчи питĕ тирпейлĕ, таврара та унашкалли çук пуль.

Кукамай патне эпĕ час-часах кайма тăрăшатăп. Мăнукĕсемпе питĕ савăнать, яланах кукăль пĕçерсе хурать. Кăмăллă, сăпайлăскер çынсене пулăшма тăрăшать. Унпа темĕн çинчен те калаçатпăр. Вăл пире ăса вĕрентет, лайăх çынсем пулччăр тет. Эпĕ хамăн кукамая питĕ юрататăп, унпа мухтанатăп. Çывхарса килекен уяв ячĕпе чĕререн саламлатăп, татах та нумай пурăнма ырă сунатăп.

**Сергей АЛЕКСАНДРОВ,**
**3 класс вĕренекенĕ.**

Муркаш районĕ,
Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул.

# Ман анне — пĕртен-пĕрре, чи çепĕçси тĕнчере

Эпĕ хамăн аннене
Питĕ юрататăп.
Сăвăмри йĕркесене,
Ăна халаллатăп.
Манăн вăл – чи илемли,
Чунăма лăпкать юрри.
Суйламаççĕ аннене,
Ма тесессĕн вăл – пĕрре.
Ман анне – пĕртен-пĕрре,
Чи çепĕçси тĕнчере.
Ăшăтнишĕн чĕрене,
Тавтапуç сана, анне.

Чăваш чĕлхинче «анне» сăмахран чи çепĕççи те чуна çывăххи çук пулĕ тесе шухăшлатăп. Анне... Кашни çыншăн мĕн тери хаклă та çывăх çын!

Манăн анне Ирина Александровна Николаева ятлă. Вăл вăтăр икĕ çулта. Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралса ӳснĕ. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче физикăпа математика факультетĕнче ăс пухнă. Халĕ анне Энĕшпуçĕнчи вăтам шкулта математикăпа информатика предмечĕсене вĕрентет.

Анне кăвак куçлă, хăмăр çӳçлĕ. Унăн питĕнче яланах ăшă кулă. Вăл çуркунне пекех илемлĕ, черчен, ырă, тарават, маттур, вашават... Алли мамăк пек çемçе, сăн-пичĕ Нарспи пек хитре, сасси чуна пырса тивмелле çепĕç, чунĕ çурхи хĕвел евĕр пур ачине те пĕр пек ытама илсе ăшăтать.

Икĕ ачана кун çути парнеленĕ вăл. Тĕпренчĕкĕсене пĕр пекех юратать. Пурнăçра ырра усалтан уйăрма, çынсене хисеплеме вĕрентет, тĕрлĕ ĕçе хăнăхтарать. Вăл ачисем чăн-чăн çын пулса çитĕнессе шанать. Эпир те ăна питĕ-питĕ юрататпăр, пур-çукшăн кулянтармастпăр. Эпĕ яланах лайăх паллăсем илме тăрăшатăп, çитĕнӳсемпе савăнтаратăп. Аннен ăслă сăмахĕсене ăша хыватăп.

Вăл пире мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ӳстерет. Манăн та ун пекех сăпайлă, ĕçчен, ырă кăмăллă пулас килет. Анне пурри – телей. Пирĕншĕн унран хакли никам та çук, аннесĕр çын мĕнле пуян пулсан те телейлĕ пулаймасть. Унăн ырă сăмахне, ĕçне, вĕрентĕвне эпир нихăçан та манас çук.

**Кристина НИКОЛАЕВА.**

Вăрмар районĕ,
Энĕшпуç шкулĕ.



© *Елена НИКОЛАЕВА (Вăрмар районĕ, Энĕшпуç) ӳкерчĕкĕ.*

# Хĕвел пек ăшă, уйăх пек çутă пул

Кам пире мĕн пĕчĕкрен ӳстерет савса куллен? Вăл пирĕн çепĕç, кăвар чунлă, тăван аннем. Йывăр вăхăтра манпа юнашар пулнишĕн, çĕр çывăрмасăр пире ӳстернишĕн... Тавах сана пуриншĕн те, аннесĕм!

Кӳрентернĕ пулсан – каçаратăн, йăнăш тусан – ăнланатăн. Татах та тата ыйтатăп, каçар мана, аннесĕм! Каçар, кашни кун ăшă сăмахсем каламаншăн, хушăран кӳрентернĕшĕн, пур çĕрте те санăн ĕмĕтӳсене тивĕçтерейменшĕн! Эсĕ каланă сăмахсем яланах ман пуçăмра, ырăпа усала уйăрма вĕрентни пĕрмай асăмра!

Эпĕ сана çывхарса килекен уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Ырлăх, сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп! Паянхи пекех яланах хитре те кăмăллă, хĕвел пек ăшă, уйăх пек çутă пул! Тавах сана, юратнă аннесĕм, эс пурришĕн!

**Диана ИВАНОВА.**

Вăрмар районĕ,
Энĕшпуç шкулĕ.

АСАИЛӲ

# Вăрçа лекнĕ шкул çулĕсем

**Чăваш Республикинчи Хĕрлĕ Чутай районĕн Çĕн Атикасси ялĕ... Çирĕммĕш ĕмĕрĕн хĕрĕхмĕш çулĕсене епле тӳссе ирттернĕ-ши вăл? Кун çинчен кам каласа параять?**

**Пирĕн Тĕп урамра пĕр ватă хĕрарăм пурăнать – Нина Ивановна Самсонова. Вăл 1929 çулхи январĕн çиччĕмĕшĕнче çак ялтах çуралнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă чухне вуниккĕри хĕрача Çĕн Атикассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта ăс пухнă. Çав хаяр çулсене мĕнле астăвать-ши вăл? Пире мĕн каласа параять?**

– Паллах, вăрçă пуçланни çинчен илтнĕ куна манма çук. Эпир ачаччĕ. Çав кун ытти чухнехи пекех колхозра ĕçлеттĕмĕр, çум çумлаттăмăр. Ĕçрен таврăнсан пире Совет Союзне фашистсем тапăнни çинчен пĕлтерчĕç. Пурте макăратчĕç, çав шутрах эпĕ те, нимĕн ăнланмасăрах.

**– Сирĕн тăвансене çара илсе кайнă-и?**

– Çук. Пирĕн çемье пысăкчĕ: атте, анне, Елена, Гаврил, Люба, Соня тата эпĕ. Атте, Иван Семенович, граждан вăрçине хутшăннă. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланнă вăхăта вăл утмăл урлă каçнăччĕ, çавăнпа ăна çара тек чĕнмерĕç. Шăллăм Гаврил ытла çамрăкчĕ-ха. Кайран вунçиччĕ тултарсан ăна çара илсе кайрĕç, анчах фашистсемпе мар, яппунсемпе çапăçма. Чĕрĕ таврăнчĕ, пирĕн ялтан унпа пĕрле çапăçăва хутшăннă икĕ салтак вара вилĕмрен çăлăнайман.

**– Çынсем мĕнле пурăннă?**

– Питĕ йывăрччĕ. Выçлăх тата сивĕ. Çакă йăлтах хамăрпа пулса иртнине халĕ ĕненес те килмест. Мĕнле чĕрĕ юлнине пĕр Турă кăна пĕлет ĕнтĕ. Пирĕн, ачасен, пĕрмаях çиес килетчĕ. Шкулта яшка çитернине астăватăп. Мĕн яшки ĕнтĕ вăл? Шыв, тĕрлĕрен курăк – вĕлтĕрен, пултăран, мăян тата кăштах çăнăх. Тутине паянхи кун та астăватăп.

Вăрçă çулĕсенчи çав яшкаран тутлăраххи нимĕн те çук пек туйăнчĕ. Мĕн те пулин çимелли тупăнĕ-ши тесе тăхтавра киле кайнине астăватăп. Кив Атикасси хĕрачи те ман хыççăн пынăччĕ, унăн та хырăмĕ выçнă. Пирĕн киле çитрĕмĕр, анчах нимĕн те çук. Выçăскерсем каялла шкула чупрăмăр. Мĕн тăвăн? Çавара пĕр пĕрчĕ яман пулин та вĕренмеллех. Тетрадь те, чернил та, кĕнеке те çукчĕ. Çапах вĕренеттĕмĕр, тăрăшаттăмăр. Вăрçăччен класра 24-25 ачаччĕ, çав хаяр çулсенче вара выçлăха пула 5-6 вĕренекен вилчĕ.

**– Çынсем выçăпа вилнине эсир хăвăр куçпа курнă-и?**

– Курнă. Вĕрсе хăпартнă пек хырăмлă хĕрарăмсемпе ачасем, кăвакарнăскерсем, аран сывлаканскерсем, пушă та вилĕ куçлăскерсем. Вилесем... Хресчен пӳрчĕсенчи вилесем. Пирĕн кӳршĕ, Дарья Потрикеева, выçлăха пула пурнăçран уйрăлчĕ. Икĕ ывăлĕ, Егорпа Сергей, тăлăха юлчĕç, анчах пурпĕрех йывăр пурнăçа парăнмарĕç. Вăрçă хирĕнче фашистпа çапăçнă, ялти кашни килте вара – выçлăхпа тата сивĕпе. Вут-шанкă пуçтарма çунашка туртса Кĕрлев ялĕ çывăхĕнчи вăрмана çӳреттĕмĕр. Вăрманçă хушаматне халь те лайăх астăватăп. Вăл мана çын пек мар, тискер чĕрчун пек туйăнатчĕ.

**– Мĕншĕн?**

– Вут-шанкă пуçтарма ватă çынсемпе ачасем çӳретчĕç. Вĕсем чĕрĕ йывăççине касатчĕç-им? Çук! Хăрăк турат çеç пуçтаратчĕç. Çав вăрманçă куçĕ тĕлне пул кăна – вут-шанка туртса илетчĕ, çунашкана çĕмĕретчĕ, ятлатчĕ. Вăрмантан сивĕ çуртсене нимсĕр-мĕнсĕрех таврăнма тиветчĕ. Сивве пула класра ларма питĕ хĕнччĕ. Пĕррехинче шартламана чăтаймасăр шкултан тухса тарма шут тытрăмăр. Хатĕрлентĕмĕр çеç, пире Ольга Филимоновна вĕрентекен асăрхарĕ те: «Ну, ăçта каятăр-ха эсир, класа кĕвăрт!» – терĕ. Пурте класа таврăнтăмăр. Эпир вĕрентекенсене питĕ хисеплеттĕмĕр, хаклаттăмăр.

**– Вăрçă вăхăтĕнче уявсем пулатчĕç-и?**

– Çапла. Çĕнĕ çул та, мартăн 8-мĕшĕ те, майăн 1-мĕшĕ те, ноябрĕн 7-мĕшĕ те. Ун чухне пирĕн ялта клуб çукчĕ, çавăнпа пĕтĕм уява шкулта ирттереттĕмĕр. Вăрçă пынине пăхмасăрах çынсем нумайăн пуçтаранатчĕç. Кашни килте сахалтан та пилĕк-ултă çын пурăнатчĕ. Халăх ниме пăхмасăрах савăнма пĕлетчĕ. Никама та инкекре хăварман, туслăх ялан хуçаланнă.

**– Ăçта ĕçлеттĕр вара?**

– Ăçта? Колхозра. Пирĕн ферма нумайччĕ: сурăхсен те, сыснасен те, ĕнесен те, чăхсен те. Тата, паллах, лаша вити те пурччĕ. Анчах лашисем ватă тата ырханччĕ. Лайăххисене вăрçа илсе кайнă.

**– Ака-сухара епле вара?**

– Çуркунне енне выльăх апачĕ пĕтсе çитет, шăпах çавăн чухне хире тухмалла: сухаламалла, сӳрелемелле тата акмалла. Мĕнпе? Епле майпа? Инçетри улăхра, Çĕмĕрле районĕнчи Макарин ялĕ патĕнче, ĕçлеттĕмĕр. Çулла унта утă капанĕсем туса лартаттăмăр. Анчах вĕсене хамăр яла мĕнле илсе килмелле-ха? Лашисем ырхан, вăйсăр. Хĕрарăмсем йывăр лава хăйсемех туртатчĕç. Шутласа пăхăр: унталла вунă çухрăм ытла, каялла та çавăн чухлех. Мĕн тери тертлĕ ĕç!

**– Ачасем пулăшатчĕç-и?**

– Çуркунне çитсенех ĕçлеме пултаракан ачасем хире тухатчĕç. Шкулта чи кĕçĕннисем çеç юлатчĕç. Эпир, имшерленсе çитнĕскерсем, шыçăннăскерсем тата чирлĕскерсем, урасене аран-аран куçарса ырхан та вăйсăр лашасемпе тата вăкăрсемпе çĕр сухалаттăмăр, сӳрелеттĕмĕр тата акаттăмăр.

**– Пĕтĕмпех хăвăр тĕллĕн ĕçленĕ-и?**

– Çук, паллах. Манăн атте хутла пĕлетчĕ, çавăнпа ăна инспектор ĕçне шанса панăччĕ. Вăл хирсем тăрăх çӳресе ачасем мĕнле ĕçленине тĕрĕслетчĕ. Ăна улталама çукчĕ: çĕре мĕн тарăнăш сухаланине тата миçе хутчен сӳреленине тĕп-тĕрĕс палăртатчĕ.

**– Колхозра сире çитеретчĕç-и?**

– Çапла, пĕр пысăк хуранта колхоз пăтти пĕçеретчĕç. Эпир ăна çавăн пек калаттăмăр. Аслисене пĕр чашăк паратчĕç, пире вара, ачасене, – çурри çеç. Аслисемпе тан ĕçлеттĕмĕр пулин те.

**– Нумай акаттăрччĕ-и?**

– Çапла, мĕн кăна акман пуль: сĕлĕ те, тулă та, ыраш та, урпа та, ыттине те. Çу каçипех çав анасене çумкурăкран тасататтăмăр. Çумкурукĕ ун чухне хальхинчен йышлăрахчĕ.

**– Ĕçлекенсене колхоз мĕн те пулин паратчĕ пуль?**

– Ун чухне ĕç кунĕсене шутлатчĕç. Кашни куншăн 200 грамм тырă паратчĕç. Çапла пурăнатчĕ пирĕн ял çав хаяр вăрçă çулĕсенче. Кĕркунне вара тырпула пухса илеттĕмĕр те фронта ăсаттăмăр, хамăр салтаксене Çĕнтерĕве çывхартма кăштах та пулин пулăшма тăрăшаттăмăр.

**– Эппин, эсир те Çĕнтерĕве çывхартма тăрăшнă?**

– Эпĕ çеç мар, пурте ĕçлетчĕç, пĕтĕм Çĕн Атикасси Çĕнтерӳшĕн вăй-халне хĕрхенмерĕ. Çав ылханлă Гитлера çĕнтертĕмĕр вĕт! Паянхи пурнăç мĕнрен япăх? Манăн йăлтах пур: кирпĕчрен хăпартнă пысăк çурт, газ, электричество, шыв çителĕклĕ, кашни уйăхрах пенси парасçĕ. Вăрçă çулĕсемпе танлаштарсан эпĕ халĕ çăтмахра пурăнатăп. Йывăр пурнăçа тӳссе ирттерме чăтăмлăх çитнишĕн Турра тав тăватăп...

Çапла вĕçлерĕ калаçăва вăрçă асапне тӳснĕ 86 çулти хĕрарăм.

*Ираида ЕВСЕЕВА,*
*вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ.*

# Илĕртӳллĕ-çке поэзи тĕнчи



Эпир мĕн пĕчĕкрен сăвăсем вĕренсе, вĕсене аслисенчен илтсе ӳсетпĕр. Поэзи тĕнчи илĕртӳллĕ те асамлă, хăйне евĕрлĕ те тĕрлĕ енлĕ. Хăшĕ çакна тарăннăнах туйса ача чухнех сăвăсемпе туслашать, кайран хăй те илемлĕ йĕркесем шăрçалама пуçлать.

Çиччĕмĕш класри Толя Челябин та поэзин анлă тĕнчине иленнĕ. Çакна вăл шкулти «Çамрăк журналист» кружока çӳрени те çирĕплетет. Ара, унта арçын ача хăйне килĕшнĕ ĕçе пурнăçлама хăнăхать-çке! Вăл упа пуринчен ытла кăсăкланнине те палăртрĕ. Кружокра çамрăк авторсем тĕрлĕ темăпа сочинени çырса, тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе явса, кăсăклă япаласем çинчен каласса пултарулăхне аталантараççĕ.

Ырă кăмăллă арçын ача хăйĕн сăввисенче ытларах çутçанталăк илемне, унăн кашни вăхăтне сăнарлать, юратнă ашшĕпе амăшĕ, тĕрлĕ професси пирки те шăрçалать. Тупмалли юмахсем те сăвăлласа çырма пултарать вăл.

– Пĕррехинче пирĕн шкула «Тантăш» хаçат ĕçченĕсем килнĕччĕ, – аса илет Толя. – Эпĕ ун чухне математикăпа иртнĕ олимпиадăра мала тухнăччĕ те вĕсем ман çинчен юратнă кăларăмра çыратпăр терĕç... Хаçатăн çĕнĕ номерĕнче хам пирки пичетленнĕ статьяна курсан питех те хĕпĕртерĕм, – йăл кулчĕ арçын ача.

Çак паллă пулăм яланлăхах çамрăк поэтăн асĕнче юлĕ. Толя «Тантăш» хаçатпа тахçанах туслă пулнине пĕлтерчĕ. Унăн хайлавĕсем те ачасен юратнă кăларамĕн страницисенче пĕрре мар кун çути курнă. Çакă çамрăк сăвăçа нимрен ытла хавхалантарать. Ара, хаçата юрăхлă сăвă çырма пултарни шӳт мар вĕт! Пурте пултараймаççĕ-çке ун пек. Толя кĕнеке вулама юратнине те пытармарĕ. Александр Пушкин тата Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕ çинчен вăл сехечĕпе те калаçма хирĕç мар иккен. Ара, çак икĕ паллă сăвăç хайлавĕсем унăн чунне чăннипех те çывăх. Уйрăмах «Руслан и Людмила» поэмăна кăмăллать. «Манăн та тĕп сăнар, Руслан пек, хăюллă та патвар пуласчĕ...», – ĕмĕтленсе калаçрĕ маттурскер.

Черчен чунлăскере пултарулăхăн тĕрлĕ енĕ те кăсăклантарать. Çавăнпа та Толик пушă вăхăтра альбомпа кăранташсем илсе илемлĕ ӳкерчĕксем сăнлама пикенет. Куçа илĕртекен ял е хула пейзажне, хитре чĕрчун е сĕтеклĕ улма-çырла курать-и – пурне те хут çине куçарма васкать вăл.

«Тантăш» вулакан ĕсене вара: «Сăвăсем, калавсем нумайрах çырчăр. Чи лайăххисене вара хаçата ярса паччăр», – кăмăлтан сунчĕ Толя.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Муркаш районĕ,
Шетмĕпуç шкулĕ.

КОНКУРС!




# Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

***«Шкулти чи пĕлтерĕшлĕ пулăм, чи пысăк ăс паракан япала, вĕренекеншĕн чи чĕрĕ тĕслĕх вăл – вĕрентекен хăй», – тенĕ паллă нимĕç педагогĕ Адольф Дистервег. Чăнах та, вĕрентекен пирĕншĕн мĕн тери пысăк ĕç тунине яланах хакламастпăр та вĕт. Вăл вара хĕрĕх пилĕк минут пыракан урока ирттерессишĕн те мĕн чухлĕ вăй хурать, пĕлĕве ачасем патне илсе çитерес тесе тем те пĕр шухăшласа кăларать.***

Февралĕн 26-мĕшĕнче Вĕренӳ институчĕн акт залĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсен «Эпир пулнă, пур, пулатпăр» саккăрмĕш конкурсĕ иртрĕ. Унта район тапхăрĕнче çĕнтернĕ тăхăр учитель хутшăнчĕ. Вĕсене саламлама Раççей Федерацийĕн вĕрентӳпе ăслăлăх ĕçченĕсен профсоюзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн председателĕ З.Н.Степанова, Вĕрентӳ институчĕн проректорĕ А.Р.Кульева, Чăваш Республикинчи тăван чĕлхепе литература вĕрентекенĕсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи Г.Л.Никифоров тата Вĕренӳ институчĕн доцентĕ сăмах илчĕç.

Конкурса хутшăнакансем хăйсен ăсталăхне «Тăван ен, манăн шкул, манăн педагогикăри ĕçĕм» презентацире, «Манăн педагогикăри тĕп шухăш» эссе çырса тата ăсталăх урокĕнче кăтартрĕç.

Канаш районĕнчи Шăхасан шкулĕн вĕрентекенне çитекен пулмарĕ, Эльвира Николаевна ШЕРКИ çĕнтерӳçĕ ята тивĕçрĕ. Эльвира Николаевнăн ытти сенчен урăхларах хушамачĕ çинчен каласа хăвармасăр та май çук.

– Манăн хушаматăм чăн чăвашла янăрать. Вырăсла ăна «Львова» тесе куçарма пулĕ. Иран чĕлхинчи «шер» (арăслан) сăмах çумне -ки аффикс хушăннипе пулса кайнă, – çапла ăнлантарчĕ пултаруллă вĕрентекен.

Педагог ĕçне суйласа илсенех вăл çак ĕç кăткăслăхне тата яваплăхне туйса илнĕ.

– Кунсерен ĕçе васканă май час-часах хамăн вĕрентекенĕмсене аса илетĕп. Вĕсен ĕçне, пĕлĕвне, тăрăшулăхне кура эпĕ те паян ачасене тарăн пĕлӳ паракансен йышĕнче. Шкулти кашни кун пĕрпĕринчен уйрăлса тăрать, пĕр кунĕ те теприн пек иртмест», – шухăша ярçĕ Эльвира Николаевна çырнă эссери йĕркесем.

Ăсталăх урокĕнче пултаруллă вĕрентекен ачасене темăпа епле кăсăклантарса яма пултарнине, урокра ĕçлес хастарлăхне епле ӳстерме пулнине, вĕренĕве вăййапа çыхăнтарни темăна çăмăллăнрах ăса хывма пулăшнине кăтартса пачĕ. «Вĕренекенсем» доска çинче кăтартнă «пӳлĕме» хаваспах «сĕтел-пуканпа» илемлетрĕç, мечĕк пулăшнипе ыйту-хурав меслечĕпе те аван ĕçлерĕç.

Çак конкурсрах «Тетте» журнал редакцийĕ те пулчĕ. Тӳрременĕх ан ăнланăр, Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăм шкулĕн вĕрентекенĕ Алина Геннадьевна Петрова урока çапла кăсăклă йĕркеленĕ-çке.

– Паян эпĕ сирĕн умра вĕрентекен мар, «Тетте» журнал редакторĕ. Эсир вара – çак журнала ĕçе вырнаçма килнĕскерсем, – терĕ вăл «вĕренекенсене».

Чи кăсăкли, урокри темăсене журналти рубрикăсем пек йĕркелеме пулать иккен. Кашни тĕрĕслев витĕр ăнăçлă тухакан «смайлика» тивĕçет. Урок вĕçĕнче вĕрентекен кам чи нумай «смайлик» пухнине кура пай редакторĕпе унăн пулăшаканне палăртать.

Светлана Вячеславовна Тяхмусова вара урокра тухья тата калпак пирки калаçу йĕркелерĕ. Калпакĕ эпир лавккара туянма хăнăхнăскер мар, Шăмăршă тăрăхĕнчи чăваш хĕрĕсем тухья çийĕн тăхăнаканни. Ăна та ахаль кун мар, мăшăр ыранă чухне тăхăнмалла иккен.

– Чăваш тумĕ тăхăннă чухне эпир чылай чухне пĕлтерĕшĕ пирки шухăша каймастпăр та, çавăнпа çакăн пек урокçене ирттерни усăллă, – терĕ Светлана Вячеславовна.

Вĕрентекенсем хатĕрленĕ ăсталăх урокĕсем питĕ кăсăклă та хаваслă иртрĕç. Шкул ачисен сăнарне калăпланă студентсене те тав тумалла.

Çапла вара тĕрлĕ номинацире çак вĕрентекенсем çĕнтерчĕç:

**Надежда Михайловна АЛБУТОВА** (Çĕмĕрле районĕ, Якуртушкăнь шкулĕ) – «Ăсталăх урокĕшĕн»;

**Марина Васильевна ТОКАРЕВА** (Етĕрне районĕ, Чирĕккасси шкулĕ) – «Ырăлăх çăлкуçĕ»;

**Алина Геннадьевна ПЕТРОВА** (Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм шкулĕ) – «Çĕнĕлĕхлĕ вĕрентекен»;

**Светлана Михайловна НАЗАРОВА** (Красноармейски районĕ, Мăн Шетмĕ шкулĕ) – «Илемлĕ вулав ăсти»;

**Альбина Николаевна ЕФИМОВА** (Муркаш районĕ, Чуманкасси шкулĕ) – «Ăспаруçă-вĕрентекен»;

**Раиса Николаевна ЕРМОШКИНА** (Вăрнар районĕ, Уравăш шкулĕ) – «Манăн педагогикăри тĕнчекурăм»;

**Алевтина Афанасьевна ИВАНОВА** (Елчĕк районĕ, Кĕçĕн Таяпа) – «Тĕпчевçĕ-вĕрентекен»;

**Светлана Вячеславовна ТЯХМУСОВА** (Шупашкар, 43-мĕш шкул) – «Презентаци».

Çĕнтерӳçĕсене ЧР Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствин вĕренӳ пайĕн ертӳçи В.В.Бычков саламларĕ. Э.Н.Шеркие вăл компьютер техникине туянма май паракан сертификатпа чысларĕ.

Ачасем, вĕрентекенсен ĕçне хисеплĕр, вĕсен кашни сăмахне ăса хывса çитĕнӳ туса савăнтарăр. Эпир пурнăçра хамăр вырăна тупсан вĕсем те пирĕншĕн атте-анне пекех савăнаççĕ. Этемлĕх аталанăвĕн кирек хăш тапхăрĕнче те вĕрентекенсем пулнă, пур, пулаççĕ те.

ФЕСТИВАЛЬ

# «Пирĕн вăй – чĕлхере, сăмахра...»

Нумаях пулмасть Вĕренӳ институтĕнче тăван чĕлхепе литературăна вĕрентекенсен чăваш поэзийĕн классикĕ К.В.Иванов çуралăкне халалланă «Чăваш чĕлхипе литератури. Усă урок-2015» виççĕмĕш фестивалĕ иртрĕ. Унта чăваш шкулĕнчен хĕрĕх тата вырăс шкулĕнчен тăхăр учитель хутшăнчĕ. Хăйсен материалне Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Тутар Республикин Аксу районĕсенчен пĕрер, Муркаш районĕнчен тăхăр, Тăвай, Елчĕк, Етĕрне, Йĕпреç, Канаш районĕсенчен виçшер, Куславкка, Вăрнар, Патăрьел районĕсенчен икшер, Шупашкар районĕнчен пĕр çын ярса панă. Хула шкулĕсенчен: Çĕнĕ Шупашкарпа Шупашкартанултă, Канашран икĕ, Куславккаран пĕр учитель хăйсен ĕçĕсене тăратнă. Комиссире кафедра ĕçченĕсем тата шкул учителĕсем пулчĕç.

Фестивале институт проректорĕ А.Р.Кульева уçрĕ, пурне те ăнăçу сунчĕ. Чăваш чĕлхипе литератури кафедрин пуçлăхĕ А.С.Егорова та вĕрентекенсене саламларĕ, тăван чĕлхемĕр малашлăхĕ çинчен шухăшламаллине те асăрхаттарчĕ:

– Тăван чĕлхе çĕр çинче упранса юласси – пирĕн тивĕç, – терĕ вăл. – Пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменне пурте хутшăнăпăр. Эпир – филологсем. Пирĕн вăй – чĕлхере, сăмахра.

Пурĕ çирĕм тăхăр учитель ăсталăх урокĕ кăтартса пачĕ, харпăр хăйĕн опычĕпе паллаштарчĕ. Чи малтанах, çĕнтерме мар, пĕр-пĕринчен тĕслĕх илме килнĕ-çке вĕсем.

Галина Петровна Васильева Тăвай районĕнчи Йăнтăрчă вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Çак фестивальте вăл «Иртни хыçа юлать, малашлăх шухăшлаттарать» темăпа литература урокĕ ирттерчĕ. Кашни ачана хускатма ăнтăлаканскер вĕсене час-часах: «Айăпа кĕтĕн пулсассăн еплерех касăру ыйтмалла-ши?» – евĕр ыйтусемпе ĕçлеттерет. Сюжетлă ӳкерчĕксем тăвасси те вĕренекенсене майĕпен-майĕпен проект ĕçĕсене хăнăхтарать. Паллах, технологисем аталанни вĕрентекене те пурнăçпа тан утса пыма хистет. Муркаш районĕнчи Калайкасси шкулĕн вĕрентекенĕ Александр Марсович Степанов урока пултарулăх ласçи пек йĕркелет. Çапла майпа вăл кашни ачана хăйĕн талантне уçма пулăшать. Вăрнар районĕнчи Туçи Çармăс шкулĕнчен килнĕ Ольга Васильевна Маркова «Нарспи çĕршывне» йыхравларĕ, илемлĕ кĕвĕ вĕрентекенĕн кашни сăмахне тарăнрах ăнланма май парать.



Етĕрне районĕнчи Палтай шкулĕн вĕрентекенĕ Надежда Валерьяновна Серебрякован урокĕ те хăйне евĕрлĕ. Ачасем 45 минут хушшинче ултă урок витĕр тухаççĕ: эстафета (пĕр-пĕрне ыйту парса ĕçлесси), математика (хисеп ячĕсемпе ĕçлесси), суйлав диктанчĕ, куçа кантармалли зарядка, вырăс чĕлхи (танлаштарасси), информатика (тест ыйтăвĕсемпе ĕçлесси).

– Пирĕн шкула вырăс ачисем те çӳреççĕ, – каласа парать Муркаш районĕнчи Шомик шкулĕнчен килнĕ Татьяна Михайловна Майорова. – Малтан вĕсем тăтăшах: «Пире чăваш чĕлхи мĕн тума кирлĕ?» – тетчĕç. Халь кун пек ыйтăва пачах илтместĕп, пурте тăрăшса, кăсăкланса вĕренеççĕ.

Маттур вĕрентекен «Нарспи» поэма сыпăкĕсене чăвашла çеç мар, вырăсла тата акăлчанла та вулаттарать иккен. Куçарусемпе паллашнă хыççăн вара хăшĕ-пĕри: «Ку поэмăна чăвашлах вуламалла, ун пек илемлĕрех янăрать», – тет. Тăван чĕлхене ытларах юратасси шăпах уттисемпе танлаштарнă хыççăн вăйланать те.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен «Усă урок» виççĕмĕш фестивалĕн çĕнтерӳçисем çаксем пулчĕç:

***Вырăс шкулĕсенчен:***

1-мĕш вырăн – **Алена Андреевна ЯДРИЦОВА** (Йĕпреç районĕ, 2-мĕш вăтам шкул);

2-мĕш вырăн – **Валентина Павловна ЕФИМОВА** (Куславкка районĕ, 3-мĕш вăтам шкул);

3-мĕш вырăн – **Любовь Васильевна КУДРЯВЦЕВА** (Шупашкар, 19-мĕш шкул).

***Чăваш шкулĕсенче:***

1-мĕш вырăн – **Надежда Валериановна СЕРЕБРЯКОВА** (Етĕрне районĕ, Палтай шкулĕ);

2-мĕш вырăн – **Татьяна Михайловна МАЙОРОВА** (Муркаш районĕ, Шомик шкулĕ); **Валентина Михайловна ИВАНОВА** (Канаш районĕ, Сухайкасси шкулĕ); **Александр Марсович СТЕПАНОВ** (Муркаш районĕ, Калайкасси шкулĕ);

3-мĕш вырăн – **Надежда Ивановна МОРОЗОВА** (Куславкка районĕ, Елчĕк шкулĕ); **Ольга Александровна ВИШНЕВА** (Муркаш районĕ, Шатракасси шкулĕ); **Татьяна Анатольевна ВАСИЛЬЕВА** (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Октябрьски шкулĕ).

Малашне фестивале çĕнтерӳçĕ районĕнче ирттерме сĕнӳ пулчĕ. Эппин, çитес çул вĕрентекенсем хăйсен урокĕсене Етĕрне районĕнче кăтартĕç.

*Страницăна Лариса ПЕТРОВА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

### Асран кайми телейлĕ кун

Чунра мĕн пуррине вăл çырчĕ те çырчĕ. Хушăран шухăша кайса ларчĕ...

«...Хама пиллĕкре чухне астума пуçланă эпĕ. Çĕнĕ Шупашкарта пурăнатпăр. Атте вилнĕ хыççăн пурнăçăн йăлтах улшăнчĕ. Садике те сайра леçме тытăнчĕ аннем. Пирĕн патăртан çын татăлма пĕлместчĕ... Вĕсемпе курнăçас мар тесе ытларах урамра çӳреттĕм. Килтен тухса тарни те пулнă. Туссен ашшĕ-амăшĕ хĕрхенсе апат çитеретчĕ, хăшĕ-пĕри çывăрма та хăваратчĕ. Тăхăнмаллисене те вĕсемех паркалатчĕç. Пĕррехинче лавккана кĕтĕм те... теттеллĕ пулас терĕм. Ытти ачасем пекех вылякилет-çке. Ярса илчĕç мана. Ара, укçасăр юрамасть-çке унтан мĕн те пулин илсе тухма. Çĕнĕ Шупашкарти интерната ячĕç... Хыççăн темиçе ачана маршруткăна лартса Куславккана ăсатрĕç. Унта çитиччене кантăкран урамалла тинкерсе пытăм. Йывăççем, юпасем вĕлтлетсе çеç юлчĕç... Вăхăт шурĕ те шурĕ. Пĕр кунхине пирĕн ушкăна интернат ĕçченĕ тата палламан хĕрарăмпа арçын кĕрсе тăчĕç.

– Ачасем, камăн яла каяс килет? Хапăл тăвакана ак çак куккапа инке хăйсемпе пĕрле илсе кайĕç, – терĕ интернат ĕçченĕ кашни ача çине тĕсесе пăхнă май.

Эпĕ нумай шухăшласа тăмарăм, çиçĕмле хăвăртлăхпа вĕсем патне сирпĕнсе тухрăм та тилмĕрсех:

– Мана! Мана илсе кайăр! Эпĕ сирĕнпе кирек ăçта кайма та хатĕр! – хӳхлерĕм куççуль витĕр чĕтренсе.

Хайхи ырă çынсем çитес вăхăтрах кунта тепĕр хутчен килессине каласа хăварчĕç. Эпĕ çав куна тӳсейми кĕтрĕм... Пĕр кун иртрĕ, иккĕ... Кашни кун алăк патне пыратăп, чӳрече янахĕ çине чавсаланатăп. Аякка-аяккa тинкерсе пăхатăп. Халь-халь аслă çулпа арçынпа хĕрарăм килессĕн туйăнать. Утăмсене хăвăртлатса ман патала кĕçех çитесçех! Сукмака куç илми тинкеретĕп. Сахал-и, нумай-и вăхăт иртрĕ... пăхатăп – вĕсем килеççĕ! Вĕсем! Çак вăхăтра пурте илтмелле:

– Атте-анне, эпĕ сире аякранах куратăп! Акă эпĕ вăл, сирĕн хĕрӳ – чӳрече умĕнче! – терĕм çав тери савăнса.

...Атте мана вăйлă аллисемпе ярса илчĕ те çӳле çĕклерĕ. Унтан хăй çумне чăмăртарĕ, чăн-чăн хăйĕн тĕпренчĕкне курнишĕн савăннă пек... Эпĕ те имшеркке аллăмсемпе ăна юратса ыталарăм... Çав вăхăтра мана кунтах хăварасран питĕ шиклентĕм. Çук, кунта юлас килмест, ĕмĕрне те!

Эпĕ çакнашкал нихăçан та телейлĕ те савăнăçлă пулман. Мĕнешкел ырă! Лайăх! Ĕнтĕ манăн атте те, анне те пур! Вĕсем интернатран илсе тухрĕç-çке, мана, пачах та ют ачана...

Çакă пулчĕ те манăн асран кайми кун! Атте... Анне! Епле савмăн вĕсене? Атте... Юман евĕр кĕрнеклĕ. Улăп пек вăйлă. Унăн сарлака çурăмĕ хыçĕнче е юнашар мăнаçланса утма мĕн тери аван. Ун хӳтинче мана пӳрнепе никам та тĕкĕнеймĕ. Атте-анне! Сирĕн çирĕн те ачаш аллăрсем мĕн тĕрлĕ ĕç тумаççĕ-ши? Аппасемпе пиччемсем пирки те ыррине çеç калама пултаратăп. Аттепе анне киле илсе килсен тĕпелте кăштăртатакан Аня тӳрех мана хăй ытамне илсе ачашларĕ...

Мана, начаркка та чирлĕскере, ырă пурнăç тата сывлăх парнелес тесе мĕн кăна тумарĕç-ши вĕсем? Тĕрĕссипе, пахчари чечек пекех ӳсетĕп... Таврари ешĕл вăрмансен, уй-хирсен, улăх-çарансен сывлăшĕпе киленетĕп. Вĕсем... çывăхрах, ал тăс çеç... Тĕнче! Мĕн тери хитре Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕ. Паян та сăпкари пекех пурăнатăп. Мĕн кирли йăлтах-йăлтах пур... Шкула кайнă чухне анне ялан укçа парса ярать: «Хĕрĕм, выçă ан çӳре. Мĕн çиес килнине туянма тăрăш», – тет. Хама çут тĕнче парнеленĕ анне вара халĕ чылай улшăннă. Тепĕр чухне телефонпа калаçатпăр. Анчах мана кунтах лайăх, аттепе анне патĕнчех! Вĕсем пулман тăк шăпам мĕнле килсе тухĕччĕ-ши? Лайăххи пулас сукчех. Тавах аттепе аннене мана йывăр вăхăтра алă тăсса панăшăн. Вĕсем пирки эпĕ нумайччен калаçса ларма пултаратăп.

Анне шкул библиотекинче вăй хунă вăхăтра, атте физкультура учителĕнче тăрăшнă. Аннем илемлĕ те сăпайлă хĕр, аттем çӳллĕ те яштака каччă пулнă. Вăл аннене пĕрре курсах юратнă... Ĕнтĕ вĕсем çемье çавăрнăранпа 38 çул çитрĕ. Пĕр-пĕрне ăнланса, шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççĕ. Икĕ ывăлĕпе виçĕ хĕрне тĕрĕс-тĕкел ура çине тăратнă. Халĕ тăхăр мăнукĕпе савăнса кун-кунлаççĕ. Эпĕ вĕсен улттăмĕш тĕпренчĕкĕ пулатăп... Аттепе аннене çав тери юрататăп... Вĕсем интернатран илсе хăйсен хӳттине илмен пулсан, пĕлместĕп

# Пахчари чечек пек ӳсетĕп... атте-анне ăшшинче

1-мĕш стр.

паянхи кун эпĕ ăçта пулаттăм-ши? Кам ăнланса, ырă сĕнӳ-канаш парса пурнăç сукмакĕпе тӳрĕ чунпа утма вĕрентĕччĕ-ши? Кам çупăрласа юратĕччĕ-ши? Е ытти ачасем пек кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек кантăк умне ларса хам çуратнă аннене кĕтсе ларнă пулăттăм ахăртнех... Çуратакана мар, пăхса ӳстерекене анне тесçĕ. Çавăнпа та маншăн Владимир Алексеевичпа Юлия Васильевна Макаровсем – чи-чи хаклă çынсем... Эпĕ вĕсен умĕнче ĕмĕр парăмра...» – вĕçлерĕ хăй ĕçне Маша Конева.

Çак ĕçе Юлия Васильевна куççульсĕр вулаймарĕ... «Ах, Маша, сана усрава илесси те ăнсăртран пулса тухрĕ-çке», – тесе хĕрне ăшшăн ыталаса хăй çумне чăмăртарĕ.

### Ку хура çынна кам юраттăр?!

Карапашра çуралнă Юлия Васильевнăн ачалăхĕ çăмăллăхпа иртмен. Амăшĕ тăватă ачине ура çине тăратассишĕн пĕчченех ырми-канми тăрăшнă. Икĕ аслă пиччĕшĕ вĕренме кайсан: «Капла укçа çитерме йывăр», – тесе Волгограда ĕçлеме тухса кайнă вăл.

Юля килĕнче шăллĕпе çеç юлнă. Кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухнех выльăх-чĕрлĕх пăхнă. Сысна çăвăрлаттарнă, апат пĕçернĕ. Кăмака хутса кукăль-çăкăрне те янтăланă. Канмалли кунсенче пиччĕшĕсем килсе пулăшнă ăна. Амăшĕ вара час çитеймен тăван тăрăха. Ачисем уншăн çав тери тунсăхланă.

Сакăр класс хыççăн шкул вĕренме пăрахас тĕллевлĕ пулнă пике. Ара, укçа-тенкĕ çитсе пымандах Шупашкара ĕçлеме вырнаçас тенĕ. Анчах ăна кӳршĕсем сийĕнчех ырă канаш панă:

– Ачам, шкул вĕренсех пĕтермелле. Ара, аннӳ илсе килнĕ хĕвелçаврăнăша сутса пурăнмалăх нухрат тăватăнах, – тенĕ.

Вуннăмĕш класа çитсен амăшĕ тăван киле тавраннă.

– Çитĕ аякка çӳресе. Кирпĕч заводне вырнаçас, вара çурта та кирпĕчрен хăпартас, – тесе хавхаланнă.

Алла аттестат илнĕ вăхăт. Вĕренме кĕме заявлени парас чухне амăшĕ урине хуçнă. Аслă шкула учителе каяс ĕмĕтлĕ Юльăн çулĕ сасартăках хупăннă.

– Ниçта та каймастăп, аннене пăхатăп, – тесе фермăна ĕçлеме вырнаçнă.

...Эрне вĕçĕнче пĕрле вĕреннĕ тусĕ сем ялалла хавассăн утнине курсан чĕри хĕсĕнсе ыратнă. Килне çитсен вара амăшĕнчен вăрттăн ĕсĕклесе макăрнă. «Математика учителĕ пуласси ĕмĕтре çеç юлчĕ... Питĕ шел», – чунтан хурланнă хĕр.

Сентябрь уйăхĕнче шкул директорĕ библиотекăна ĕçлеме йыхравланă. Фермăра укçа аванрах тӳлеççĕ тесе килĕшмен пике. Дояркăсем вара ăна самантрах ăс пама тытăннă:

– Ан аташ-ха, Юля! Нухрат вăл тем чухлĕ пулсан та çитмест. Эсĕ çамрăк, кай библиотекăна, вырнаç. Унта чыслă. Кунта авă уваран атă каймасть. Чир-чĕр тупасси те çакăнтанах пуçланать, – вăйпах хăвалана ăна хĕрарăмсем.

Хайхискерсем ӳкĕте кĕртнех çамрăка. Юля куллен шкула çӳреме тытăннă. Ачасене кĕнекесемпе тивĕçтернĕ. Пĕррехинче ун патне пионервожатăй хыпаланса кĕнĕ те сăмах çăмхине сӳтме тытăннă.

– Пĕлетĕн-и, Юля, пирĕн пата çамрăк физкультура учителĕ килнĕ. Владимир Алексеевич тесе чĕнеççĕ маттурскере. Ара, çав тери хитре ӳкерет, купăсне те чаплă калать тет. Тем тесен те ăна пирĕн куçран вĕçертмелле мар. Атя, сăлтав тупса кайса курар ăна.

– Эй, çук! Кирлĕ мара ан калаç-ха! Ун çумĕнче мĕн тупнă эпĕ, – хирĕçленĕ хăйхискер.

Çапах курнă Юлия Васильевна вĕрентекене. Курнă та вăрт çавăрннă.

– Ах, ку хура çынна кам юраттăр? Курха, ахаль те хурамкаскер хура кофта тăхăннă... Çӳçĕ, çӳçĕ те пĕрех хутчен сутă мар-çке. Çитменнине хăва хулли пек начаркка. Çук, мана валли мар ку çын, – тесе шухăшланă вăл.

Владимир Алексеевич вара хĕре пĕрре курсах кăмăлланă. «Манăн мăшăр пуласси», – тенĕ çирĕппĕн.

Çичĕ уйăх калаçнă хыççăн хастар йĕкĕт Юльăн амăшĕ патне пырса хĕрне качча пама ыйтнă. Юля çав-çавах хирĕçленĕ.

– Эй, санпа! Каятăн пулсан кай. Кайран макăрса каялла ан кил. Каймасан ан кай! Тепĕр тесен, мĕн йăлăнтармалли пур-ши? Каччи тупăннă вĕт! – тенĕ амăшĕ çирĕппĕн.

Унтан пулас кĕрӳшĕ енне çавăрнă та:

– Хĕре илсе каятăн пулсан, кайран ватлăхра мана пăхасса шанса тăратăп, – тенĕ Владимира.

Çутçанталăк хитре тум тăхăннă вăхăтра туй кĕрлеттернĕ çамрăксем. Телейлĕ çемьере пилĕк ача çитĕннĕ: Таня, Толя, Ваня, Лена, Аня. Тĕпренчĕкĕсене мĕн ачаранах ĕç çумне çыпăçтарнă Макаровсем. Пĕрле пахчаçимĕç çитĕнтернĕ, картиш тулли выльăх-чĕрлĕхĕ валли утă-улăм хатĕрленĕ. Хăмлине те хăйсен çĕрĕ çинче çур пахча ӳстернĕ. Килти утара пăхса-сăнаса тăнă, кирлĕ чухне апатлантарнă, вĕллесене тасатнă. Килен-каян хăнана техĕмлĕ пылпа сăйланă.

Пыл тенĕрен, вĕлле тытасси те ăнсăртран пулса тухнă вĕсен. Владимир Алексеевичăн амăшĕ шыв ăсма тухнă та хурт çемйи вĕçнине асăрханă. Хăвăртрах аллинчи витрине патакпа шакканă, лешсем самантрах йывăç çине анса ларнă. Хайхисене пухса илсе тӳрех ывăлĕ патне леçнĕ. Çакăн хыççăн пуçланнă та Макаровсен хĕрӳ ĕç.

– Хуртсем усрас тесе ĕмĕрне те шухăшламан. Мĕнех, эпир нимĕнле ĕçрен те хăрамастпăр. Пуçăнса пăхас кунашкал ĕçе те, – хĕпĕртенĕ ывăлĕ.

Сутлăх милĕк, сиплĕ курăк пуçтарма та ӳркенмен. Кăçатă йăвалассине те пĕчĕккĕн хăнăхса пынă. Пулла çӳреме те вăхăт тупнă. Пӳрт валли кирпĕч çапма, çăл валли бетон кăшăлсем хатĕрлеме те ӳркенмен. Çак хатĕрсене туянма хаçатсенче пĕлтерӳ памасăрах кӳршĕ, таврари ялсенчен килекиле илсе кайнă Макаровсенчен.

Çав вăхăтрах леш касра пурăнакан асламăшĕ патне те пулăшма васканă ачисем. Почтальонкăра тăрăшаканăн пысăк сумкине йăтса кашни киле ăмăртмалла хаçат-журнал валеçнĕ.

– Ах, ача-пăча тени чупсах ĕçлет çав вăл, маттурсем, – тесе мăнукĕсене кучченеçпе хавхалантарнă Аполли аппа.

### Çемьере – «çĕнĕ кайăксем»

Çапла пурнăç вĕресе тăнă. Сисмесĕрех çул хыççăн çул иртнĕ те... Макаровсен тĕпренчĕкĕсем çитĕнсе ашшĕ-амăш килĕнчен тухса кайнă. Унччен çуртра хаваслă ача сасси янăранă пулсан, пӳрт сасартăках кичемленнĕ. Владимир Алексеевичпа Юлия Васильевна иккĕшех килĕнче кун-кунлама тытăннă.

Канмалли кунсенче ачисем килсех çӳренĕ, ялан хиллех аслисене пулăшса хăварнă. Пĕррехинче вара кил хуçи тĕлĕнмелле калаçу пуçарнă.

– Юля, пирĕн усрава ача илмелле марши? Хамăрăн тĕпренчĕкĕмĕрсем çунат айĕнчен вĕçсе тухса кайрĕç вĕт. Пӳрте кĕрес килмест. Унта ытла тунсăх, – чун пăшăрханăвне пĕрле пайланă хăйхискер.

Мăшăрĕ ун çине кăн! пăхнă. Ассăн сывланă та хăй шухăшне пĕлтернĕ.

– Пилĕк ача пăхса ӳстернĕ ан канăç курмарăм. Ларса канаймарăм, тăраничен çывăраймарăм. Халĕ кăштах канас килет. Ара, хамăр ачасем килсех çӳреççĕ-çке, çитменнине мăнуксем те пур, – хирĕçленĕ хĕрарăм самантрах.

– Сана ăнланатăп-ха... Пурнăç тени такăр сукмакпа чупасси мар. Çапах илмеллех пирĕн ача. Ывăл мар, хĕрпĕрчи пултăрччĕ. Çак çĕр çинче пĕр чуна та пулин йывăрлăхран хăтарса ырă пурнăç парнелесчĕ. Пĕр тĕпренчĕк валли эпир çăкăр, пылак çимĕç туянаймастпăр-и, апат пĕçерме çĕрулми туса илейместпĕр-и? Чей ĕçме те пылĕ пур. Уншăн чун-чĕререн тăрăшăпăр. Ятарлă пӳлĕм те хатĕр авă, анчах... ачи çеç çук, – çаплах калаçнă вăл пĕр чарăнми.

Владимир Алексеевич çав-çавах тăлăх ачасене хĕрхенмелли, вĕсене май пур таран пулăшмалли пирки пупленĕ. Ир те, кас та, сĕтел хушшине апата ларсан та... Икĕ çул иртсен Юлия Васильевна кун пирки ачисемпе канашланă, лешсем пĕрре те хирĕç пулман. «Эпир савăнатпăр çеç. Пире шăллăм е йăмăк пулни пĕрре те кансĕрлемест. Çемье пысăкланни япăх-и вара вăл?»

– тенĕ хавхалантарса. Çав тери савăннă кил хуçи. Канăçне йăлтах çухатнăскер мăшăрне интерната кайма васкатнă.

Куславккари интерната кĕрсенех Макаровсен умĕнчен пĕчĕк те çав тери имшеркке хĕрача чупса иртнĕ.

– Эх, пире çакăн пекки пулсан юратчĕ те... Ăна эпир сăпкари пек ӳстерĕ пулăттăмăр, – хăпартланнă сасартăках Владимир Алексеевич.

...Макаровсене ача суйлама пĕрремĕш класа илсе кĕнĕ, çук, чуна килĕшекеннине курман вĕсем. Иккĕмĕшсем патĕнчен те шăппăн çеç алăка хупса тухнă. Шкула кайма хатĕрленекен ушкăнра хайхи коридорпа чупакан начаркка хĕрпĕрчине асăрхасан Владимир Алексеевичăн куçĕ сасартăках çиçсе тытăннă.

– Ку ача пирĕн пулать! – тенĕ çирĕплетсех.

... Кăштахран интернатра икĕ уйăх пурăнакан Маша Коневăна Макаровсем килне илсе кайнă. Çиччĕри пепке лĕпĕш пек çăмăл пулнă, вунултă кило çеç тайнă. Урама усăлма тухсан та утнă çĕртех тӳне-тӳне кайнă...

Тĕлĕкре вара ялан чуна ыраттармалла кăшкăрнă:

– Анне, ан хĕне!!!

Ачана нумай ялана вĕрентнĕ, хăнăхтарнă Макаровсем. Апат çиме, вуламаçырма, уроксем тума... Час-час чирленине пула сывлăхне çирĕплетме санаторисемпе лагерьсене те темиçе хутчен янă. Шкулта та аван вĕренме тытăннă хĕрача... «4» тата «5» паллă илсе ашшĕ-амăшне савăнтарнă.

Икĕ çул иртсен Макаровсем патне Куславккаран каллех шăнкăравланă.

– Реабилитаци центрĕнче пурăнакан Максимпа Кристина Богдановсемшĕн чун ыратать. Вĕсене кĕçех кунтан куçараççĕ. Манăн вĕсене пĕрре те интерната ярас килмест, ытла лайăх ачасем-çке. Тен, пĕртăвансене эсир хăвăр хӳттĕре илетĕр? – тенĕ воспитательница.

Çак калаçу хыççăн Макаровсем каллех Куславккана çул тытнă... Ĕнтĕ Богдановсем те Сĕнтĕрвăрри тăрăхне пурăнма куçнă. Куншăн Маша та çав тери савăннă. Пурте атте-анне тесе чĕнме тытăннă Макаровсене. Машăпа Максим малтан пĕр класра вĕреннĕ, кайран арçын ача кадет ушкăнĕнче пĕлӳ илме тытăннă. Туслă çитĕннĕ ачасем, пĕр-пĕриншĕн кар тăнă. Килĕштерсе пилĕк çул пурăннă хыççăн Максимпа Кристинăна тăван аппăшĕ илме килнĕ. Арçын ача самантрах куççульленнĕ. «Анне-атте, манăн ниçта та каяс килмест!» – ĕсĕкленĕ куççульне шăла-шăла.

Чунĕсем ыратнă Макаровсен, анчах ачасен аппăшне хирĕçлеме пултарайман. Пӳрт пушанса юлнă. Кил хуçипе мăшăрĕ кăна мар, Маша та тунсăха путнă...

Паян Маша Октябрьски шкулĕн тăххăрмĕш класĕнче вĕренет. Экзаменсене тăрăшса хатĕрленет.

– Маша ку çулхине хулана тухса каятăп терĕ те... йăлтах кулянса ӳкрĕмĕр. Ара, ача-çке вăл. Унта вĕреннĕ çĕрте темле çамрăк та пулĕ... Хĕрĕме кӳрентерчĕç пулсан? Нумай пулмасть Маша: «Анне, ан пăшăрхан-ха, тепĕр икĕ çул хамăр шкултах вĕренетĕп. Шухăша улăштартăм ĕнтĕ. Сире те пăрахса хăварас килмест», – терĕ те мĕн тери хĕпĕртерĕмĕр. Нăйкăшакан чĕрем те лăпланчĕ. Алпа тата кăштах пĕрле пурăнатпăр-ха. Пĕлӳ суртĕнче çав тери килĕшет ăна. Килес çул вара вуннăмĕш кадет класне çӳресшĕн. Çавăнпа халех кадетсемпе юрлама, ташлама çӳрет. Вĕсен хитре уттине курса тĕлĕнет. Максим та шăнкăравласах тăрать. Халĕ те пире атте-анне тесе чĕнет. Эх, хĕр чухне мăшăрăм пирки: «Ах, ку хура çынна кам юраттăр?» – тени аса килет те... хамран хам тĕлĕнсе кулатăп. Ара, манăн мăшăр ĕçчен те ырă кăмăллă. Халĕ ăна авă пурте юрататпăр. Унран хаклă çын çук пирĕншĕн, – терĕ Юлия Васильевна.

Канмалли кун ачисемпе мăнукĕсем тăван киле пуçтарăнсан хĕпĕртеççĕ Макаровсем. Максимпа Кристина пирки те манмаççĕ вара, скайппа чĕнсех туличченех пуплеççĕ. Çирĕп çемье халĕ те унчченхи туслăха упрать.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Сĕнтĕрвăрри районĕ, Çатракасси.

# Пĕлеймерĕмĕр атте ăшшине, пĕччен çитĕнтерчĕ пире анне

**Красноармейски районĕнчи Супарта çуралса ӳснĕ Таисия Яковлевна Яковлева шифоньертан кивĕ сăнӳкерчĕксем кăларчĕ те диван çине ларчĕ. Алăра амăшĕн сăнӳкерчĕкĕ.**
**– Эх, аннем, ылханлă вăрçа пула эсĕ мăшăрсăр, эпир аттесĕр юлтăмăр. Пирĕн юратнă çыннăмăр ăçта пуç хунине те пĕлместпĕр, – терĕ пăшăрхануллăн.**



## Хăрушă хыпар

Таиç çемьере асли пулнă. Çавна май шăллĕсемпе йăмăкне астунă: апатлантарнă, тумтирĕсене çуса сапланă.

Яковлевсем икĕ чӳречеллĕ çенĕксĕр çуртра пурăннă. Пӳрчĕ кивĕскер кăна пулнă, çапах кăмака ăшшине çил ачисем илсе тухса каяйман.

– Кунта сирĕн патра аван. Пирĕн авă пӳлĕмре витрери шыв та шăнать, – тесе кӳршĕ-аршă ларма каçнă.

Пĕр кунхине тăван-пĕлĕш Таиç ашшĕне салтака ăсатма пухăннă. Пурте Яккăва каялла тĕрĕс-тĕкел çаврăнса çитме пил панă. Çулталăкри Рита ашшĕ тавралла хăй чĕлхипе тем пуплесе чупкаланă.

– Ах, Турă! Ахаль те пурнăçĕ йывăр. Малашне ачасемпе çеç епле пурăнмалла? – куляннă Таиç амăшĕ чун-чĕререн.

– Кирек епле пулсан та тĕпренчĕкĕмĕрсене фермăна ĕçлеме ан яр. Хăвах пĕлетĕн, выçăпа ĕнесем, лашасем вилеççĕ. Уншăн выльăх пăхакана тӳлеттереççĕ. Айăпсăртан укçа тăкакламалла-и? – тенĕ мăшăрне Якку.

Кайран, вăхăт иртсен, Таиç амăшĕнчен çапла ыйтнă:

– Анне, салтак тени мĕн-ши вăл? – тесе кăсăкланнă.

Асли кĕçĕннине тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарнă.

– Апла атте киле таврăнатех! – савăнăçлăн сиккеленĕ хĕрача.

Таврана хăрушă хыпар сарăлнă. Вăрçă пуçланнă! Арçынсене кашни кун фронта ăсатма тытăннă. Хĕрарăмсемпе ватăсем тӳсмелле мар куляннă.

Пĕр кунхине Таиç амăшĕ, сăнран улшăннăскер, пӳрте кĕрсе тăнă.

– Тата мĕн курмалли юлчĕ-ши? Хĕрсене те вăрçа илсе кайма тытăнчĕççĕ, – тесе сак çине лаках ларнă.

Амăшĕн йăмăкне, çирĕм пĕррери Нинăна, фронта ăсатнă иккен. Повестка килнĕ. Чи кӳренмелли – пикене пуян çын хĕрĕ вырăнне салтака янă. Почтальонкăра ырми-канми тăрăшакан Нина пурне те ырлăх-сывлăх сунса тăван тăрăхран тухса кайнă.

## Хăçан тăраниччен çийĕпĕр?

Пĕрремĕш класа çӳреме тытăннă Таиç. Çамрăк вĕрентекен, Людмила Лаврентьевна, темăна аван та тĕплĕн ăнлантарнă. Ачасем тетрадь çукран кивĕ кĕнекесем çине çырнă. Урок хыççăн вара вăрмана васканă. Юман çăпанĕ пуçтарнă. Тутăхнă пăта ярса чернил хатĕрленĕ вĕренекенсем.

Хĕрача килте те ахаль ларайман. Кăмака хутма катаран вутă йăтнă. Кунне улттă хутлани те пулнă.

Пĕр кунхине амăшĕ ĕçрен час таврăнайман. Квас чусти хăпарса тăкăнма тытăннă. Таиç нумай шухăшласа тăман, ăна çăрма пуçăннă. Кайран Варвари аппăшĕ патне чупнă.

– Атя-ха пирĕн пата, çăкăр пĕçерсшĕн те эпĕ, – ăнлантарнă пĕчĕкскер.

– Ачам, савăт тĕпĕнчи чустана çаплипех хăварнă эсĕ, – тесе хайхискер çанă тавăрса ĕçе тытăннă.

Çакăн хыççăн хĕрача ырă шăршăллă çăкăр пĕçерме вĕреннĕ.

Мăйăр пулса çитсен вара Таиç вăрмана çул тытнă. Йывăççен хушшинче шăппăн, пĕр сас-чӳ кăлармасăр çӳренĕ. Асăрханулла пулмасан уй-хир, вăрман сыхлавçисем самантрах çимĕçе туртса илнĕ.

– Эх, хăçан тăраниччен мĕн те пулин çисе курăпăр-ши? – тесе ассăн сывланă выçă çамрăк.

## Ĕне туянни

Амăшĕ ачисемшĕн тăрăшса куннеçĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Çуркуннесерен алă вĕççĕн тырă акнă, кĕркунне çурлапа вырнă. Тĕпренчĕкĕсем те пĕрле вăй хунă, çапах пурнăçа çăмăллатайман.

Ялта халăхран куланай пуçтарнă. Çулталăкра патшалăха 40 кило какай, сĕт, шăратнă çу панă кашниех. Парăм пуррисен вылăхĕсене картишĕренех çавăтса тухса кайни пулнă. Яковлевсем вара ку тĕлĕшĕнчен шар курман. Кĕçĕннисем аслисем мĕн хушнине вăхăтра пурнăçласа пынă. Пĕр каçхине вĕсен ĕни вилсе выртнă... Амăшĕ куляннă. Хурлăх тӳснĕ хĕрарăм çăлăнăç тупнах. Икĕ пĕчĕк пăрушне сутса пăру туяннă.

– Хам пурăннă чухне ачамсене выçă лартмастăпах! – тенĕ вăл картише Машука çавăтса кĕрсен.

## Тăвансем таврăнсан...

1945 çул. Пирĕннисем фашистсене тĕппипех çапса аркатнă. Яла кулленех фронтовиксем килме тытăннă. Таиç ашшĕ тăван тăрăха таврăнайман, пĕр йывăр çапăçура пуçне хунă вăл.

Нина аппăшĕ вара тĕрĕс-тĕкел, кăкăр тулли орден-медальпе çитнĕ. Кашни тăванне пĕрер тутăр парнеленĕ. Паттăр пике вăрçă пурнăçĕ пирки тĕплĕн каласа кăтартнă. Таиç те унăн сăмахĕсене тимлĕн итленĕ.

– Аттене нимĕçсем пĕр шелсĕр вĕлерчĕç-ши? Аппа епле хăрушă пулăмсем пирки аса илет те, – шухăшланă хĕрпĕрчи кулянса.

Кăштахран ашшĕн шăллĕ те салтакран таврăннă. Вăл Германире службăра пулнă. Темĕн тĕрлĕ кучченеç илсе килнĕ. Анчах Таиç кил-йышне кăмăлтан пĕр чĕлĕ çăкăр та паман.

– Эх, ĕнтĕ арçынсăр хĕрарăм текехрен кама кирлĕ? – тесе куляннă амăшĕ.

## Сехет йĕппи — хыр йĕппи мар...

Вунулттă тултарсан Йĕпреçе вăрман касма янă. Пĕррехинче ĕç вĕçленсен киле пуçтарăннă халăх. Утсан, утсан çухалса кайнă вĕсем. Пурте шăннă. Çӳресен, çӳресен çул çине тухнă та Красноармейски еннелле утнă.

– Эх, пуян çын ачисем ăшă пӳртре рехетленеççĕ пуль, эпир вара нуша курса çӳретпĕр, – тесе ӳпкевлĕн калаçнă.

Хĕр шутне кĕрсен Таиçе паспорт паман.

– Ĕçлеме ӳркенместĕн. Колхозра тăрăшакансем те кирлĕ, – тенĕ ăна.

1954 çулхине килĕшӳпе Шупашкара стройкăна кайнă. Кирпĕчсене унта урапапа турттарнă, Таиç те арçынсемпе пĕр танах ĕçленĕ.

– Эсĕ йывăр ĕçре тар тăкнă пулас, – тĕлĕннĕ унран чылайăшĕ.

Пултарулăскер Красноармейски районĕнчи Именкассинче çул тунă çĕрте те тăрăшнă: наçилккапа хăйăр, вак чул, тăпра йăтнă.

Мускава торф кăларма кайсан Таиçе паспорт параççĕ, çакăн хыççăн Канаш районĕнчи кирпĕч заводĕнче, Çĕрпӳре сӳс тылланă çĕрте тăрăшнă. 1961-2000 çулсенче Шупашкарта стройкăра вăй хунă. Ĕçе юратса пурнăçланăшăн Таисия Яковлевнăна дипломсемпе, хаклă парнесемпе хавхалантарнă.

– Вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçа никама та сунмастăп. Шел, аттесĕр ӳсрĕмĕр. Çапах ята ямарăмăр. Аннене пысăк тав! Тăватă ачине тĕрĕс-тĕкел ура çине тăратрĕ. Хăй вара 96 çул пурăнчĕ. Тăнпах çӳретчĕ, калаçатчĕ. Ыратать тенине нихăçан та илтмен унран. Урине хуçрĕ те суранĕ сипленеймерĕ. Инкек сиксе тухман пулсан, тен, çĕр çула та çитетчĕ-и? – тесе Таисия Яковлевна хăй вăхăтĕнче амăшĕпе ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕке темччен хурлăхлăн пăхса тăчĕ. – Ĕнтĕ хам та, вăрçă ачи, сакăр теçетке урлă каçрăм. Вăхăт шăвать çав, вăхăт шăвать. Сехет йĕппи вăл – хыр йĕппи мар, ăна чарас тесе хуçса пăрахаймăн...

## Тем те курнă, тем те тӳснĕ...

Вăрмар районĕнчи Ыхраçырминче çуралса ӳснĕ Александр Григорьевич Шмелев пĕчĕкренех юрлама юратнă. Ытлăн-çитлĕн пурăнайман пирки кăмăла кăшт та пулин çĕклес тесе тулăх пурнăç çинчен юрă шăрантарнă.

1941 çулта Çĕрпӳри педагогика училищинчен вĕренсе тухсан кĕçĕн класcемпе ĕçлеме тытăннă. Шел, юратнă ĕçре пĕр çул çеç вăй хума тивнĕ унăн. Салтака кайма ят та тухнă.

– Вăрçăра тем те курнă, тем те тӳснĕ. Пурнăç ытла йывăрччĕ... Çапах ырă кунсем пуласса шаннă, ĕненнĕ, – чунне ыраттарсах калаçрĕ Александр Григорьевич.

Мăшăрĕпе Раиса Петровнăпа ĕмĕрĕпех педагогра тăрăшнă вĕсем.

– Эпир курнине паянхи ăру ан куртăрччĕ. Мирлĕ пурнăç пултăрччĕ ялан таврара, – терĕ кăçал август уйăхĕнче 90 çул тултаракан хисеплĕ ветеран.



*Элиза ВАЛАНС (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Вăрçă çăкăрĕ

«Çăкăртан асли çук», – эп илтетĕп пĕрмай.
Çăкăр – пурлăх, пуянлăх та мул.
«Çăкăртан асли çук, – тет мана кукамай. –
Эс, ачам, ăна тивĕçлĕ пул.
Астăватăп: тахçан, ача пулнă чухне
(Кусене эпĕ халь те манман)
Пĕчĕк çăкăр татки тыттаратчĕç пире,
Ун чух çăкăр чăнах та пулман.
Кукаçу сан, мăнукăм, вăй хунă тылра,
Хăй ача çеç пулсан та, пĕрех
Çăкăрне те çимесĕр яратчĕ фронта.
Вăл пĕлетчĕ: унта кирлĕрех.
«Вăрçă çăкăрĕ», – тетчĕç ăна пĕрисем,
Ылтăн евĕр тытатчĕç алла.
«Пурнăç-пурнăç, – калатчĕç тата
теприсем. –
Пирĕн çăкăршăн çапăçмалла!»
Вăрçăра çăкăр вăй парса тăчĕ,
Чăваш утрĕ Берлин еннелле,
Халĕ пирĕн, тăванăм, черечĕ,
Пирĕн çăкăршăн çĕнтермелле!
Ун чухне çăкăра пит упранă,
Укçаран та вăл пулнă паха.
Çăкăра пур çĕрте те мухтанă,
Анчах халĕ пачах урăхла.
Çăкăра ним те мар тĕпрететпĕр,
Ним вырне те хумастпăр ăна.
Кирлĕ мар япала пек тиркетпĕр.
Малалла апла мĕн тумалла?
Ачасем, çамрăксем, эс, мăнукăм,
Эх, илтсемччĕ те çак сăмаха!
Çăкăра эсир упрăр, юратăр,
Çăкăр пултăр анне пек паха.
Яланах асра тытăр, ан манăр,
«Çăкăртан асли çук», – тенине.
Пуç тайсамăр ăна, ăнлансамăр,
Çăкăр чăн та паха пулнине».

*Диана МОИСЕЕВА.*

Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.



## Туссем

Шап-шурах йĕри-тавра,
Хĕлле çитрĕ пулмалла.
Сĕтĕретпĕр çунашка,
Эх, чупатпăр сăрталла.

Акă эп çунашкапа
Шуса антăм васкаса.
Авă Саша ярăнать,
Мана пырса çапăнать.

Юр ăшне ӳкетĕп эпĕ.
Ыратать çамка, йĕретĕп.
Саша тăрать йăл кулса,
Ман чуна ыраттарса.

Эпĕ чупрăм килелле
Аннене элеклеме.
Саша кайрĕ хăраса,
Вĕлт! çухалчĕ вăл таçта.

Ыратмарĕ ман çамка,
Часах тухрăм урама.
Чĕнтĕм эпĕ Сашăна:
– Тусăм, тух-ха выляма!

## Çăка шухăшĕ

Пӳрт умĕнче, сулхăнра,
Ӳсет пирĕн ват çăка.
Сивĕ хĕлĕн кунĕнче
Мĕн шухăш-ши пуçĕнче?

Пытăм эп çăка патне,
Ячĕ шухăш тĕркине...
Ăна манăн асатте
Лартнă тет ăшă чухне.

Çулла çеçкере çăка,
Тутлă шăршă таврара.
Вĕлле хурчĕ ир тăрать,
Çăкаран пыл пуçтарать.

Хĕл çитсен кичем ăна,
Çакнă сырăш савăнма.
Çерçисем кĕшĕлтетеççĕ,
Туллине сăхса çиеççĕ.

«Андрюш, эс те савăнса
Тутанатăн сар пыла», –
Пĕлтерет çăка мана
Майĕпен ыйха путса.

*Андрей КОЛЬЦОВ,*
*4 класс.*

Патăрьел районĕ,
Турхан шкулĕ.

## Салтак пулнă ман атте

Салтак пулнă ман атте,
Тăнă çĕршыв чиккинче.
Сыхă пулнă вăл унта,
Кĕртмен ирсĕр тăшмана.

Салтак пулнă ман атте,
Служба иртнĕ Çурçĕрте...
Чунпа халь те салтаках,
Телей-миршĕн яланах.

Пул, аттеçĕм, çирĕп, вăйлă,
Сыхла хамрăн кил-йыша.
Телей пулсан çемьере
Пулĕ тăнăç çĕршывра.

*Иван КИРИЛЛОВ,*
*7 класс.*

Шупашкар районĕ,
Çĕньял Покровски шкулĕ.

## Вăрманта

Кайрăм эпĕ вăрмана
Уплюнкка кăмпи татма.
Куртăм улатаккана,
Асăрхарăм пакшана.
Акă татрăм кăмпана,
Хитре хăмăр питлине.
Манăн тулчĕ карçинкка.
Эпĕ таврăнтăм киле!



## Хисеплетĕп вĕсене

Пур ман тусăм – Анжелика.
Пур-ха тепĕр тус ман – Вика.
Юрататăп вĕсемпе
Ташлама, кĕвĕлеме.

Кун пек туссемпе пĕрле
Кирлĕ мар-çке хărама!
Юрататăп вĕсемпе
Чун каниччен выляма.



Çак тантăшсемпе пĕрле
Савăнмалла кăна ман.
Хисеплетĕп вĕсене
Çывăх туссем пулнăран.

## Мухтав асаттесене

Çитрĕ акă çитмĕл çул
Вăрçă пĕтнĕ кунранпа.
Пынă вăл тăвата çул,
Ăна асра тытмалла.
Вилнĕ унта салтаксем,
Айăпсăр, таса çынсем.
Çĕршыва сыхлас тесе
Пуç хунă асаттесем.

## Кăмăлтан

Юрататăп аннене –
Чи илемли, хитрине.
Пит ăста вăл юрлама,
Ташлама та тĕр тума.
Мана анне юратать,
Тутлă апатпа сăйлать.
Эпĕ ăна кăмăллатăп,
Сывлăх ытларах сунатăп!

## Маншăн тĕслĕх

Ман юратнă атте пур,
Питĕ вăйлă та маттур.
Ӳркенмест вăл ĕçлеме,
Вĕрентме те ӳкерме.
Мана питĕ юратать,
Нумай-нумай ăс парать.
Пуç таятăп аттене,
Чи вăйлине, ăслине.

## «Тантăш»

Çырăнатăп эпĕ «Тантăш»,
Чăн вăл маншăн чун йăпатмăш:
Сăвăсем унта çыраççĕ,
Конкурссем те пулкалаççĕ.
«Тантăш» – ăслисен хаçачĕ,
Чăваш ачисен çунаçĕ.
Пултаруллисем çинчен
Пĕлтереççĕ пур енчен!

## Пултаруллă ача

Сăвă нумай эп çыратăп.
Эх, юрлатăп, эх, ташлатăп!
Юрататăп ӳкерме,
Тĕр тĕрлетĕп хăш чухне.
Çитрĕм эп паян клуба
Ташлама та юрлама.
Ыран кайăп вĕренме,
Ӳкерме те ăс илме.
Пурăнатăп эп çапла,
Пурнăç шăвать малалла:
Пур çĕре те каймалла,
Конкурса хутшăнмалла!



## Çуркунне

Килсе çитрĕ çуркунне,
Хĕвел хĕртме пуçларĕ.
Питĕ ăшă пулнипе
Юр ирĕлме тапратрĕ.

Ту çамки те хуралать,
Шăнкăртатса шыв юхать.
Тухрăм эпĕ урама,
Уç сывлăшпа сывлама.

Икĕ ача пӳлнипе
Шыв çул-йĕрĕ хупланать.
Шывĕ тулса çитнипе
Пĕвине татса каять.

Пурпĕр телейпе çиçсе
Ачасем кулаççĕ,
Кĕреçине çĕклесе
Урампа утаççĕ.

Пĕр-пĕрне пӳле-пӳле
Калаçаççĕ пикенсе.
Çӳлте турат çийĕнче
Шăнкăрч юрлать юррине!

*Ольга АБРОСИМОВА.*

Тутарстан,
Аксу районĕ,
Кивĕ Саврăш.

## Юрататăп пиччене

Эпир виççĕн пĕртăван,
Аслă пичче те пур ман –
Спортпа туслă вăл ялан,
Пурăнатпăр пит аван.

Шкул вĕренсе пĕтерсен
Пичче кайрĕ салтака.
Савăнатăп чĕререн
Салтак пулса тăнăран.

Пуçтарăнчĕç тăвансем,
Килчĕç ун юлташĕсем.
Чăваш халăх йăлипе
Пурте пачĕç парнесем.

Таврăнчĕ пичче çартан,
Йăтса илчĕ кăмăлтан.
Кăвак беретне мана
Тăхăнтартрĕ ыр сунса.

*Оля АЛЕКСАНДРОВА,*
*6 класс.*

Канаш районĕ,
Вăрăмпуç шкулĕ.

## Чунтан

Çăкăртан асли çук
Тĕнчере.
Аннерен хакли çук
Çемьере.
Итлесчĕ ялан
Ун ыр сăмахне.
Çĕклесчĕ-çке ман
Анне кăмăлне.

*Валентина ПЕРЕПЕЛКИНА,*
*5 класс.*

Канаш районĕ,
Усырма шкулĕ.

## Асра тытар

Юратма пулать пурне те,
Çумăра та, хĕвеле те...
Анчах пуринчен ытла
Юрататăп эп сана.
Хура куçлă, çырă çӳçлĕ,
Ырă чунлă ман анне.
Вĕрентсе ачасене
Кăтартать пурнăç çулне.
Анне пире юратать,
Çын тăвасшăн тăрăшать.
Вăл тăрăшни ахаль мар,
Çакна ялан асра тытар.

## Хĕвел пекех

Манăн анне ир тăрса
Кал-кал ĕçе пикенет.
Пĕтĕм ăшă кăмăлпа
Тутлă апат пĕçерет.
Хĕвел пекех йăл кулса
Ăш ыйхăран вăратать,
Лайăх вĕренме сунса
Мана шкула ăсатать.
Аннене хисеплесе
Килти ĕçре пулăшатăп.
«Пиллĕк» паллăсем илсе
Чĕререн савăнтаратăп.

*Валентина ЕГОРОВА,*
*5 класс.*

Канаш районĕ,
Усырма шкулĕ.

© *Кристина ВАСИЛЬЕВА* (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ӳкерчĕкĕсем.

КОНКУРС!

# Пултарулăх шыравне тухар-и?



***Чăваш кĕнеке издательствипе «Тантăш» хаçат сире, юратнă тантăшăмăрсем, çулсеренех иртекен «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» (Чувашская книга. Юные таланты) конкурса хутшăнма йыхравлаççĕ. Кăçал ăна издательство йĕркеленнĕренпе 95 çул çитнине, Раççейри Литература тата Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкĕсене халалланă. Мероприяти тĕллевĕсем нумай енлĕ: çамрăк вулавçăсене чăваш литературипе кăсăклантарасси, ача-пăчан, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçăн пултарулăхне аталантарасси, вĕсен чунĕнче патриотизм, тăван ене хаклас туйăмсене чĕртесси.***

Ăмăртăва Чăваш Ен шкулĕсенчи вĕренекенсем çеç мар, çĕршывăмăрти ытти регионта пурăнакансем те хутшăнма пултараççĕ. Чи кирли кунта – ачан кăмăлĕ, нумай пĕлме ăнтăлни, чăваш литературипе тата культурипе кăсăкланни. Конкурс нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче пуçланчĕ те ĕнтĕ. Йĕркелӳçĕсем патне пирвайхи çырусем те çитрĕç. Эсир 6–18 çулта тăк ĕçĕрсене паянах хатĕрлеме пуçлăр. Паллах, мĕнле номинацие суйласси пирки тĕплĕн ларса шухăшламалăх, тӳресене тĕлĕнтермелли хăйне евĕрлĕ калав-сочинени çырмалăх е картина-плакат ӳкермелĕх вăхăт пур сирĕн. Ĕçсене 2015 çулхи юпа уйăхĕччченех йышăнаççĕ. Çакна çеç асра тытăр: палăртнă вăхăтран каярах килнисене пăхса тухмаççĕ.

«Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурс кăçалхипе улттăмĕш хут иртет. Пĕлтĕрхи пекех пилĕк номинаци палăртнă йĕркелӳçĕсем:

- «Интереслĕ кĕнеке» темăпа çырнă чи лайăх сочинени е калав;
- «Манăн юратнă сăнар» темăпа тунă чи лайăх ӳкерчĕк;
- «Вулама сĕнетĕп!» темăпа хатĕрленĕ чи лайăх плакат, буклет, листовка, открытка е календарь (вулавăн пĕтĕмĕшле е кăмăла кайнă кĕнекен реклами);
- «Ача аллипе хатĕрленĕ кĕнеке» – вĕренекен хăй çырнă сăвви-калавĕнчен е заметки-очеркĕнчен тăракан алăпа ăсталанă кĕнеке. Унăн хуплашкийĕ, титул листи, ячĕ пулмалла; кăларăма ӳкерчĕксемпе илемлетмелле; кĕскен автор, ӳнерçĕ пирки хыпарламалла;
- «Кĕнеке – пирĕн çемьен чи лайăх тусĕ» темăпа çырнă чи лайăх эссе – кĕнекен этем тата çемье пурнăçĕнчи вырăнĕ пирки.

Çулне-ӳсĕмне кура çĕнтерӳçĕсене виçĕ ушкăнра палăртĕç:
– кĕçĕннисем (6–12 çултисем);
– вăтам ӳсĕмрисем (13–15 çултисем);
– аслăраххисем (16–18 çултисем).

Ĕçсене хатĕрленĕ чух Чăваш кĕнеке издательствинче 2010–2014 çулсенче тухнă кĕнекесемпе тата организаци сайтĕнчи материалсемпе усă курмалла. Хаклава сĕнекен ӳкерчĕксемпе текстсене 2015 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕччен çак адреспа ярса памалла: **428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 704 е 713-мĕш пӳлĕм, «Чăваш кĕнеке издательстви».** Конверт çине «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурса» тесе çырсан, проект координаторĕн Надежда Осипован ятне палăртсан аванрах. Сочиненисене, калавсене тата эссесене вара nadesda-1@yandex.ru электрон почтипе те ярса пама юрать. Çыру пуçламăшĕнче «Конкурса» тесе асăнса хăварма кăна ан манăр.

Ытти самантсене те шута илĕр: иккĕн е пысăкрах йышпа хатĕрленĕ ĕçе пăхса тухĕç, анчах çĕнтерӳçĕсен йышне кĕртмĕç. Çавăн пекех хутшăнаканăн пĕр ĕçрен ытлашши тăратма юрамасть; эппин, хăвăр мĕн енĕпе пултаруллăраххине кура номинацие тĕплĕн суйламалла. Материалăн оригиналлă та çыпăçуллă пулмалла. Халиччен пичетленсе тухнă кĕнекесенчен пăхса ӳкернĕ ӳкерчĕксене хакламаççĕ жюри членĕсем. Сочинение, калава, эссене чăвашла та, вырăсла та çырма юрать. Заявкăна аяларах кăтартнă йĕркепе типтерлĕ те тĕрĕс, пичет сас паллийĕсемпе тултармалла.

**Сочинени е калав валли:**
Тема: «Интереслĕ кĕнеке».
Хутшăнаканăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ:
Хутшăнаканăн çуралнă дати:
Шкулăн, вĕренӳ учрежденийĕн тулли ячĕ, номерĕ:
Класс:
Килти адрес:
e-mail:
Телефон номерĕ:
Ертӳçĕн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ:
Ертӳçĕ телефонĕн номерĕ, e-mail:
Хайлава хăш кĕнеке тăрăх çырнă (авторĕ, кăларăмăн ячĕ, хăçан тата ăçта тухни):

**Ӳкерчĕк валли:**
Тема: «Манăн юратнă сăнар».
Ыттийĕ – çӳлерех кăтартнă евĕрех.
Вĕçĕнче – ӳкерчĕке хăш кĕнеке тăрăх тунă (кăларăмăн ячĕ, авторĕ, хăçан тата ăçта тухни).

Ытти номинацисемпе те çакăн евĕрлех тултармалла. Тĕплĕнрех информацие Чăваш кĕнеке издательствин сайтĕнче çак адреспа тупма пулать: ***www.chuvbook.ru*** («Конкурсы, акции» пайра). Конкурса хутшăнма заявка тăратнă вĕренекенсен списокне те çакăнтах вырнаçтарĕç.

Малтанхи 50 хутшăнакан ятарлă сертификата тивĕçĕ. Чи хăйнеевĕрлĕ те ăста ĕçсен хуçисем çĕнтерӳçĕсем пулĕç. Вĕсене Чăваш кĕнеке издательствин çуралнă кунĕнче, 2015 çулхи чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче, хаклă парнесемпе чыслĕç. Маттур та пуçаруллă вĕренекенсен ертӳçисем те хавхалантару хучĕ илĕç. Пĕтĕмлетӳсене «Тантăш» хаçатра та, издательство сайтĕнче те кăларĕç.

Пурне те ăнăçу сунатпăр! Кĕнекепе туслă пулăр, конкурса хутшăнăр! Пултарулăх шыравĕ кăсăклă та тухăçлă ирттĕр.

***Ольга ИВАНОВА.***

УЯВ

# Пĕрремĕш кĕнеке пепке пекех...



**Иртнĕ эрнере тĕп хуламăрти Ача-пăча тата çамрăксен вулавăшĕ библиотекарьсемпе çыравçăсене, учительсемпе вĕренекенсене, артистсемпе журналистсене пысăк уява пуçтарчĕ. Мĕн сăлтавпа-ха? Паллах, кĕнеке çуралнă кунне паллă тума! Хăнисем вара пурте – вулава парăннă çынсем.**

Çĕнĕ пепке «Çамрăк юлан утçă» ятлă, ăна кун çути парнелекенĕ вара – Ара Мишши. 1000 экземплярлă тиражпа тухнă кăларăм редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Владимир Гончаров. Кĕнекене вунă калав кĕнĕ: «Кашкăрпа тĕл пулни», «Çĕрĕк пан улмисем», «Ăнман кĕтӳçĕ», «Макçăм аслашшĕ», «Çамрăк юлан утçă», «Пĕчĕк повар», «Тăрăшуллă вĕренекен», «Пурнăçланайман ĕмĕт», «Иккĕмĕш çăкăр», «Кăткăс ыйту». Вĕсенчи тĕп сăнар – Макçăм ятлă арçын ача. Вăл ялта пурăнать, ытти тантăшĕсем пекех шкулта вĕренет, аслисене пулăшать. Пур ĕçе те типтерлĕ, тăрăшса пурнăçлать. Тĕрлĕ ĕмĕтпе çунатланать ача. Ан тив, пурте, тен, пурнăçланаймĕç, анчах ырри патне ăнтăлни, пĕчĕкренех ĕçпе пиçĕхсе ӳсни, çăкăр хакне пĕлни паха.

Макçăм шухăшĕсемпе ун таври ĕçпуç урлă автор ялти пурнăçа, вырăнти халахăн терчĕпе-нушине, телейĕпе-савăнăçне тĕрĕс те ĕненмелле сăнласа парать. Çыравçă хăй те ялтан тухнăçке-ха. Михаил Николаевич Краснов (литературăри псевдонимĕ – Ара Мишши) Вăрмар районĕнчи Кĕтеснерте çуралнă. Вăл ĕмĕр тăршшĕпех Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăйтытăмлăх органĕсенче ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухиччен вун пилĕк çул хушши Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствинче министр çумĕнче тата этноконфесси хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕнче вăй хунă.

«Çамрăк юлан утçă» кĕнекене халалланă уява «Катюша» хореографи ушкăнĕ (Шупашкарти «Росток» ача-пăча пултарулăх центрĕ) уçрĕ. Хĕрсен çаврăнăçуллă та илемлĕ ташши вулавăша пуçтарăннисен кăмăлне çĕклерĕ. Ара Мишши кăларăмпа паллаштарнă май кашни калав çинче пайăррăн чарăнса тăчĕ. Хăйне мĕнлерех ыйтусем хумхантарнине, çамрăк вулакансем патне мĕнлерех шухăш çитерме палăртнине пĕлтерчĕ. Ольга Иванова, пĕтĕмĕшле, редактор ĕçĕ пирки каласа пачĕ, пурне те çĕнĕ кĕнекене алла тытса пăхма сĕнчĕ. Хайлавсенче автобиографилле самантсем пурри пирки те систерчĕ вăл.

Хăш-пĕр шкулсенче калавсене урокра вуласа сӳтсе явма та ĕлкĕрнĕ-мĕн. 12, 28 тата 49-мĕш шкулсенчи чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕсем автора пысăк тав сăмахĕ каларĕç. Михаил Николаевича çавăн пекех Альбина Юрату сăвăç, журналист, Андрей Кузнецов чăваш эстрада юрăçи, Чăваш наци конгресĕн членĕ, Надежда Осипова Чăваш кĕнеке издательствин PR-специалисчĕ, Раиса Терентьева Раççей Федерацийĕн халăх çутĕç отличникĕ, педагог-ветеран саламларĕç. Раиса Терентьевна кĕнекене вырăсла куçарма сĕнчĕ. Унăн шухăшĕпе пурте килĕшрĕç.

«Çамрăк юлан утçă» – Ара Мишшин пĕрремĕш кĕнеки. Автор ачасене çĕнĕ хайлавсемпе савăнтарасса шансах тăратпăр. Эппин, пултарулăх çăлкуçĕ ан иксĕлтĕр, ĕç хавхалану кӳтĕр.

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

Пӗррехинче

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавӗсем

# Хамӑн ҫеҫ кӗҫӗнни пулас килет

Пӗлтӗр анне йӑмӑкӗ мӑшӑрне тӗлӗнмелле пепке парнелерӗ. Пӗчӗкскере Артем тесе чӗнме тытӑннине те хыпарларӗҫ хайхисем. Манӑн вара иккӗмӗш сыпӑкри шӑллӑма ҫав тери курас килекен пулчӗ. Ара, пӗр-пӗринчен аякра пурӑнатпӑр та ку таранччен хитрескере утьӑкка сиктерсе курман.

Ҫуллахи каникулта анне савӑнӑҫлӑ хыпар пӗлтерчӗ.

– Хӗрӗм, кукамусене пӗр уйӑхлӑх хӑнана каймӑн-и? – терӗ вӑл ҫӗрулми шуратнӑ вӑхӑтра.

Ыйтса тӑрать тата! Тенкел ҫинчен ялтах сиксе тӑтӑм та япаласене пуҫтарма тытӑнтӑм. Эх, хӑвӑртрах пӗчӗкскере ытама илес килет-ҫке.

Эрнекун тинех тӗл пултӑм шӑллӑма. Эпӗ пынӑ чухне вӑл хапха умӗнче кушак ҫурипе вылятчӗ. Мана курсан тӳрех картише кӗрсе тарчӗ. Ют ҫын терӗ-ши вара? Ҫур сехетрен пӗр-пӗрне хӑнӑхрӑмӑр. Ара, хайне йӑтса ҫӳренине епле ан кӑмӑллатӑр-ха? Аллисемпе ҫупса йӑл-йӑл кулакан пулчӗ. Хальлӗхе вӑл пуплеймест, анчах мӗн калас тенине ҫийӗнчех тӗшмӗртетӗп. Акӑ шӑллӑмпа мунча ҫумӗнчи сак ҫине пырса лартӑмӑр ҫеҫ, таҫтан сысна ҫури чупса ситрӗ. Малтанах вӑл валашкари шыва ӗҫрӗ, унтан усӑ лаҫҫа кӗрсе кайрӗ.

– Хаҫ! Тух унтан! – тесе хайхискере хӑмсартӑм.

Анчах вӑл мана итлесшӗн пулмарӗ. Хулӑ шыраса тупрӑм та хӑвалама тытӑнтӑм. Аран кӑлартӑм хӳтерсе. Шӑп ҫак вӑхӑтра Артем сак ҫинчен сиксе тӑчӗ те сысна хӑраса хартлатма тытӑнчӗ. Нӑрик-нӑрик ача ҫине сиксе ларать пулӗ тесе сехре хӑпса тухрӗ. Вӑхӑтра алла илтӗм хама, пӗчӗк витрепе хурантан шыв ӑсса сыснана сапрӑм. Тамаша! Еплерех ҫухӑрса ячӗ те ҫӳлелле, тупата, метр ҫурӑ сикрӗ ахӑртнех. Ӑнланмарӑм, мӗн пулчӗ-ши? Шывран ҫапла сехӗрленмелле-и? Эпир кашни кун пӗвере чӑмпӑлтататпӑр-ҫке, нимрен те хӑрамастпӑр.

Аптӑранӑ енне пӳрнене хурана чиксе пӑхрӑм... Алӑк умне епле ҫитсе тӑнине астумарӑм. Шыв вӗреме кӗнӗ иккен. Пӳрне тӳсмелле мар ыратнӑран унталла-кунталла чупкалама тытӑнтӑм.

– Аппа, аппа! – тенипе шартах сикрӗм.

Эккей, манӑн Артем пурччӗ-ҫке. Ун ҫинчен пуҫӗпех маннӑ эпӗ. Шӑпӑрлан кӳлленчӗке кӗрсе ларнӑ та ашкӑнать анчах. Пит-куҫне йӑлтах пылчӑкпа вараланӑ.

Пырса йӑтса илтӗм ӑна. Хӗвелпе ӑшӑннӑ витрери шывпа ҫӑвӑнтарма тытӑнтӑм.

– Пӗр вырӑнтах тӑр. Эпӗ алшӑлли илме кӗретӗп, – терӗм ӑнлантарса.

Пӳртрен каялла васкаса тухрӑм. Чим, ӑҫта манӑн ача?! Таҫта ҫухалма йӗп те мар-ҫке вӑл. Ӑна шыраса чӑм шыва ӳкрӗм. Аптӑранӑ енне йӑмра ҫине улӑхса йӗри-тавралла тинкертӗм. Авӑ Кируксен умӗнче темле мӗлке курӑнать. Артем ӗнтӗ, тата кам пултӑр! Чупса ситрӗм Филипповсен тӗлне. Чӑхсемпе автансӑр пуҫне урӑх нимӗн те курмарӑм. Чӗре сиксе тухасла тапать. Ара, кӗҫех пасартан мӑн аккапа мӑшӑрӗ таврӑнмалла. Вара мӗн тесе каламалла тет? Чун кӳтнӗрен кирпӗч ҫине ларса сӗрлеттерсе макӑрма тытӑнтӑм. Куҫсем те хӗрелчӗҫ ахӑртнех, ыратма тытӑнчӗҫ. Куҫҫулӗме шӑлса типӗтрӗм те килелле васкарӑм. Аслисенчен шаршан хыҫне пытанма шухӑшларӑм. Тамаша! Хӑма ҫинче Артем выртать. Кушак ҫури пекех мӑшлатса ҫывӑрать. Пӗчӗкскере кофтӑпа витсе ятӑм та питҫӑмартинчен чуптуса илтӗм.

– Урӑххан ача пӑхма килместӗпех. Пӗр кунтах йӑлӑхрӑм унран. Мӗнле ҫапла пӗр вырӑнта лармалла мар вӑл? Ӑна пула сыснана ҫухатрӑм. Чим-ха, вилсе кайман-ши пӗчӗкскер? Вара лектереҫҫӗ мана, – терӗм сак ҫине ларнӑ май.



© Юля КУЗЬМИНА (Йӗпреҫ районӗ, Ҫӑкалӑх) ӳкерчӗкӗ.

Акӑ ҫитрӗҫ манӑн тӑвансем пасартан.

– Ну, лайӑх-и ача пӑхма? – терӗ йысна сумкинчен панулми кӑларнӑ май.

– Аха, – терӗм пӑшӑрханӑва кӑтартас мар тесе.

– Апла пулсан аҫупа аннӳне те пӗчӗкки илсе килме хушас-ха, сана кичем ан пултӑр, – терӗ мӑн акка.

Ку сӑмахсем йӑлтах кӑмӑла хуҫрӗҫ. Пире мӗн тума ача! Эпӗ хам та ӳссе ҫитеймен-ха. Мӗн, анне чӗрҫийӗ ҫинче иккӗн ачашланса лармалла тет-им? Ун пек тӑвӑр пуласси-не пӗлмеҫҫӗ-им? Ҫук, пӗчӗкки валли вырӑн ҫук унта. Вӑл мана кансӗрлекенни кӑна пулать.

– Халӗ пире пепке тавраш кирлӗ мар. Манӑн хамӑн ҫеҫ кӗҫӗнни пулас килет. Ҫавӑнпа кун пирки, тархасшӑн, килтисемпе ан калаҫӑр, – асӑрхаттартӑм куҫҫульленсе.

Вӗсем нимӗн те чӗнмерӗҫ. Ман ҫине пӑхса кулкаласа тӑчӗҫ. Кур-ха эсӗ вӗсене, тупнӑ шӑл йӗрмелли!

Халӗ киле кайма шиклӗнетӗп. Урай варринче Артем пекки ларсан? Вара... ӑна манӑн кашни кун пӑхмалла пулать-им?

# Тутлӑ пулӑ

Пӗвере ҫынсем пулӑ сӗреҫҫӗ. Хайсем шавлаҫҫӗ, кулаҫҫӗ. Эпӗ ҫак ӳкерчӗке карта хушӑкӗнчен пӑхса йӑлӑхса та ывӑнса ҫитрӗм. Алла пӗчӗк витре илсе хӑюллӑн ҫеҫ хайхискерсем патне пырса тӑтӑм.

Ҫыран хӗрринчи йывӑҫ ҫумӗнче тем чухлӗ пулӑ выртать. Тупата, пӗр миххе яхӑн карп пулас. Шывсӑр аптӑранӑскерсем ҫатӑлтатаҫҫӗ кӑна.

– Мӗн шӑтарасла тинкеретӗн? Нихӑҫан та ниҫта та пулӑ курман-им? Асту, вӑрлама ан ӗмӗтлен. Хамӑра та сахал! – мӑкӑртатрӗ симӗс кӗпеллӗ хӗрарӑм.

Ҫухалсах кайрӑм. Ним калама аптӑранипе витрене тунката ҫине лартрӑм.

– Ахалех кӳрентеретӗр. Ун пек шухӑш пуҫра пачах та пулман, – терӗм лӑпкӑн ҫеҫ.

Акӑ таҫтан хура йытӑ лӗпӗстетсе килчӗ те хайхи хӗрарӑм патне пырса ларчӗ. Лешӗ вара ӑна пилӗк карп персе пачӗ. Хамхам вӗсене хӑпӑл-хапӑл хыпса ҫӑтрӗ. Эх, эпӗ вара мӗн тери ӑмсанса пӑхса лартӑм Шарика.

Пӗве леш енчен хура ҫӳҫлӗ арҫын сасартӑк кӑшкӑрчӗ.

– Маруҫ! Кил-ха ку енне! Сӗрекере тем чухлӗ пулӑ. Пуҫтарса пӗтерейместпӗр, – ҫатӑлтатрӗ савӑнӑҫлӑн.

Хайхи хӗрарӑм вашлаттарчӗ ҫавӑнталла. Йытти те унран юлмарӗ.

Пӗччен юлтӑм. Ҫакӑнпа усӑ курса пулӑсене витрене тултартӑм, унтан пӗвене каялла шыва ятӑм. Пӑчӑ-ҫке. Мӗнле чӑтмалла тет вӗсен шӑрӑх ҫанталӑка?

Кӗҫех Маруҫ аппа хашкаса ҫитрӗ.

– Савӑнса пӗтерейместӗп! Леш енчи ҫыранра та мӗн чухлӗ пулӑ. Вӗсене ӑшаласа, типӗтсе, тӑварласа ҫийӗпӗр. Пурнӑҫ епле лайӑх, чӑнах! Чим-ха, кунта карпсем сахалланнӑ пулас. Ӑҫта хунӑ эсӗ вӗсене?! Такама сутса ятӑн-им?! – чӑр пӑхрӗ хайхискер ман ҫине.

Шӑпӑртах тӑратӑп. Лешӗ пушшех тарӑхрӗ.



© Юля КУЗЬМИНА (Йӗпреҫ районӗ, Ҫӑкалӑх) ӳкерчӗкӗ.

– Мӗн, аннӳ лавккаран пулӑ илсе параймасть-им? Укҫӑр-тенкӗр ҫук пулсан, апла асаннӳне кала! Унӑн пенҫи укҫи пур вӗт! – тулхӑрчӗ ҫаплах лӑпланаймасӑр ниҫта кайса кӗрейми.

Эккей, асаннепе аннене те тӗртсе илчӗ. Мӗнпе усал тунӑ-ши вӗсем ӑна? Нимӗн те ӑнланмастӑп.

– Пӗвене ятӑм, – терӗм ним пулман пекех.

– Ах, путсӗр-ҫке эсӗ! Мӗншӗн апла хӑтлантӑн?

– Шеллерӗм вӗсене. Кун пек шӑрӑхра хӑв шывсӑр пурӑнайӑн-ши? Ан манӑр Маруҫ аппа, пулӑсен те чунӗсем пур. Вӗсем те пурӑнасшӑн.

Вӑл тарӑхнипе палан пек хӗрелсе кайрӗ. Чунӗ ыратнӑран ахӑртнех унталла та кунталла уткалама тытӑнчӗ. Мана илтмелле мар тем мӑкӑртатма тытӑнчӗ.

– Паян ӗҫ ӑнчӗ-тӑк, ӑнчӗ-ӗ! – тесе пулӑҫӑ арҫын пӗве леш енчен кунта килсе тӑчӗ.

Мана асӑрхасан тӑпах чарӑнчӗ вӑл.

– Кам ачи эсӗ? Мӗн туса ҫӳретӗн кунта? – кӑсӑкланчӗ куҫран шӑтарасла тинкерсе.

– Ҫак касрах пурӑнатӑп. Пирӗн пӳрт тӑррине хӗрлӗ сӑрӑпа сӑрланӑ. Мана килӗшет вӑл тӗс. Халӗ вара уҫӑлса ҫӳретӗп, килте ларса ывӑнтӑм. Ҫитменнине усӑ сывлӑшпа киленес килет, – ӑнлантартӑм лӑпкӑн ҫеҫ.

Йӑл-л кулчӗ хайхискер.

– Тимӗрҫӗ Петӗрӗн хӗрӗ пулӗ-ха эсӗ.

– Аха... Эсир мана епле пallатӑр вара? Тата... атте унта ӗҫленине камран илтнӗ? – тӗлӗнтӗм курӑк ҫине ларнӑ май.

– Кулӑшла ыйту паратӑн. Санӑн аҫуна пурте палаҫҫӗ тата хисеплеҫҫӗ. Вӑл пӗтӗм ял хахне тем те туса парать: ҫава, хачӑ хайрать, турчӑка, ухват, шӑлтӑрма ӑсталать... Аствататӑп, пӗрре мана черетсӗр ҫуна туса панӑччӗ. Алли ылтӑн ҫав, нимӗн те калаймӑн. Чим-ха, сана кучченеҫ парса ярам, – тесе пӗр пӗчӗк витрене пулӑпа самантрах тултарчӗ.

Еплерех хӗпӗртерӗм! Килтисем те савӑнаҫҫӗ ӗнтӗ! Ура ҫумӗнче тепӗр карп выртнине курсан пӗшкӗнсе ӑна та илтӗм. Анчах усал хӗрарӑм ӑна самантрах туртса илчӗ.

– Пулӑран тӑранаймарӑн-им? Хапсӑнчӑк! – каласа хучӗ вӑл сасартӑках.

– Пастай-ха, пӗчӗкскере епле кӳрентерме хӑятӑн? Сана усал сунмарӗ-ҫке вӑл. Тепӗр тесен, пулла эсӗ мар, эпӗ тытнӑ. Ҫавӑнпа та кун пирки урӑх сӑмах ан пултӑр, – тесе ҫав пулла та ман витрене чӑмтарчӗ.

Кӑмӑллӑн киле ҫитрӗм. Пыы-ысӑк карпсене анне ҫатмара ӑшаларӗ. Пӗчӗк пулла вара аквариума ятӑм. Ҫакӑн хыҫҫӑн юратнӑ кушакӑм йӑлтах канӑҫне ҫухатрӗ. Тяппине ялан ҫав савӑта чикесшӗн. Пӗр кунхине юнаса та илтӗм.

Халӗ апла хӑтланмасть. Аквариумри пулӑ ҫине куҫ сиктерми пӑхса ларать. Ытти чухне кашни кун аннепе ӗне сума тухаканччӗ, ӗнтӗ ун пирки йӑлт манчӗ. Пӗве хӗрринче кӑмӑллӑ ҫын парни мана ҫеҫ мар, кушака та килӗшнӗ иккен. Ыран пулӑ курма юлташсем те килетпӗр терӗҫ-ха. Мӗнех, ӑмсанччӑрах вӗсем мана!

Анчах вӗсем киличчен мӑр-мӑрӑм ҫеҫ карпа ҫисе ан ятӑрччӗ. Ҫавӑнпа питӗ сыхӑ пулмалла. Каҫхине, каҫхине ҫав савӑта ӑҫта вырнаҫтармалла-ши? Чим, шифоньер тӑррине хӑпараймастех вӑл. Ҫавӑнта лартатӑп та.

● ИЛЕМ КĔТЕСĔ

# Тута çуркалансан

Хĕлле тата çуркунне тăтăшах тута типсе çуркаланать. Ку ўт сўхерех те черченрех пулнипе сыхăннă. Сăлтавĕ те тĕрлĕрен: çанталăк улшăнни, нўрĕклĕх тата витамин çитменни, ытлашши сивĕ е шăрăх тата ытти те. Çавăнпа та тутана яланах тимлĕх уйăрмалла, пăхмалла. Гигиена, нўрĕклетекен тата ўте сыхлакан бальзамсемпе усă курмалла.

Кунсерен ятарлă, килте хатĕрленĕ маска туни те усăллă. Сăмахран, кашни кун ăшă пыл сĕрсе 15-20 минут тытăр. Хăймапа темиçе тумлам тип çу тата лимон сĕткенĕн хутăшĕ те ўт çуркаланасран аван пулăшать.

Çавăн пекех услам çу е вазелин сĕрме юрать. Хăяр нимĕрĕнчен хатĕрленĕ маска вара ўте нўрĕклетĕ. Олива çăвĕпе киви нимĕрне хутăштарнă маска тутана çемçетĕ. Ăна 20 минут тытнă хыççăн ăшă шывпа çумалла. Чей йывăçĕнчен хатĕрленĕ çу та ўт çуркаланнинчен хăтарĕ.

Çакна та астăвăр: урамра тутана çыртма е çулама юрамасть. Вăл типсе кушăрханать, кайран çуркаланать. Типнĕ ўте çыртса вистелемелле мар. Усă сурана микробсем лексен мĕн пуласси каламасăрах паллă.

● РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН






Хисеплĕ Надя! Ку ўтри салă парĕсем активлă ĕçленипе çыхăннă. Çўçе шампуньпе çунă хыççăн тĕрлĕ курăка вĕретнĕ шывпа чўхени усăллă. Ăна валли хăмла, салтак тўми, хурăн папки тата вĕлтĕрен кирлĕ. 2 литр шыва кашни курăка 4-шар кашăк ярса вĕретмелле. Сивĕнсен шĕвеке марлăпа сĕрмелле.

Кирлĕ хатĕрсем ал айĕнче пулмасан тĕттĕм тĕслĕ çўçе – уксус хушнă шывпа, сутă тĕслине лимон сĕткенĕ хушнипе чўхемелле. Пĕр литр шыв валли пĕр кашăк уксус е лимон сĕткенĕ кирлĕ. Çавăн пекех час çулланакан çўçе 1 кашăк типĕ горчицăна 1 литр лĕп шывра ирĕлтерсе чўхемелле.

## Илемлĕ каларăшсем

✓Пурнăçра нимĕнрен те хăрамалла мар. Ăнланмалла çеç.
*МАРИЯ КЮРИ*

✓Вăйсăррисем таварăççĕ, вăйлисем каçарăççĕ, телейлисем манаççĕ.

✓Телее ан шырăр. Хăвăр телей пулăр.
*ОШО*

✓Пĕртен пĕр чăн-чăн йăнăш – маларах пулса иртнĕ йăнăшсене тўрлетменни.
*КОНФУЦИЙ*

✓Ăмсанупа çынсем хăйсен телейсĕрлĕхне кăтартаççĕ.
*СЕНЕКА*

# Макияж вăрттăнлăхĕсем

**Вĕрентекенсем нихăçан та хĕрачасем косметикăпа усă курнине ырламан. Косметологсем вара урăхла шухăшлаççĕ: вĕсем çамрăк ўте те çитĕннисенни пекех тимлĕх уйăрмаллине палăртаççĕ. Çавна май кашни хĕрачан косметичкинче чи кирлĕ япаласем – пите çунă чухне усă курмалли хатĕр, ўте нўрĕклетекен крем (ăна ўт тĕсĕпе (тип) килĕшўллĕн тата хăвăр миçе çултине пăхса туянмалла) – пулсан аван. Косметика хатĕрĕсемпе пĕлсе усă курмалла çеç, ун чухне ўтпе çыхăннă пăтăрмахсем аптăратмĕç. Çутçанталăк условийĕсенчен те сыхлĕ ку, пĕчĕк çитменлĕхсене те пытарма пулăшĕ.**



Ача-пăчана юрăхлă крем, сăмахран, ўт вĕтелеННине ирттерет, сивĕрен, çилрен те сыхлать. Çуллă ўт валли те ятарлă хатĕрсем пур. Вĕсем шатрасенчен, хура пăнчăсенчен, хĕрелнинчен тата ытлашши çуран хăтăлма пулăшаççĕ.

Гигиена тата çутă та йăлтăркка тута писевĕпе усă курасси çамрăксем хушшинче анлă сарăлнă. Вăл çутçанталăк панă илеме пытармасть, ăна пушшех те илĕртўллĕрех кăтартать.

Ирхине тĕкĕрте хамăра сăнанă чухне часчасах сăмса тăрринче е пит çăмартинче хĕрелнĕ шатрана асăрхани те пулкалать. Кун пек чухне ăна ятарлă корректорпа е ўт сĕмне улăштаракан (тональный) кремпа сĕрсе пытарма май пур. Тĕссĕр пудра та косметичкăра кирлĕ япаласенчен пĕри. Пит çулланса илемсĕр йăлтăртатнинчен шăпах вăл хăтарать. Ирхине, шкула каяс умĕн унпа усă курма сĕнеççĕ косметологсем.

Пит-куçа сăрланă чухнехи тĕп тĕллев – çамрăклăха, таса та çепĕç ўте палăртасси. Çавна май ўт тĕсĕпе пĕр килекен крем, çиелтен пудра сĕрмелле. Пит шăммине, янаха, тăнлав тĕлне кĕрен писеве пуçнă кистĕкпе кăштах лектерĕр.

Аслă классенче вĕренекенсем пурăна киле пите çеç мар куççене те сăрлама пуçлаççĕ. Кунта вара кăранташ-тушьпа ытлашши усă курасран асăрханмалла.

Куç хупанкине писевпе сăрлас умĕн кăштах пудра сĕрмелле. Тулаш енчи куç кĕтессине тĕттĕмрех, шалтине сутă писевпе сăрлăр. Тĕттĕм тĕслине кистĕкпе тăнлав еннелле сăтăрса тирпейлемелле.

Куççем илемлĕрех те палăртуллă курăнччăр тесен писев тĕсĕ вĕсеннипе пĕр пек пулмалла мар. Тĕслĕхрен, симĕс куç валли сăрă, кăвакрах сĕмсем, кăвак куç валли хăмăр, хĕрлĕ-кăвак, хăмăр куç валли ўт тата ылтăн тĕслĕ писев суйламалла.

Косметика пулăшнипе эпир куççене палăртуллăрах, тутана илемлĕрех, сăмсана та хитререх тума пултаратпăр. Кирлĕ пек çеç усă курмалла.

Тепĕр тесен ăнсăртран сăмса тăррине шатра сиксе тухсан ытлашши пăшăрханма та кирлĕ мар. Ку сире кам та пулин юратса пăрахнине пĕлтерет-çке! Тимлĕрех пулса вăл кам пулнине ăнкарма çеç тăрăшмалла. Вара шатра мĕнле çухалнине те сисмесĕр юлăр!

Ку сĕнўсем сире кирек мĕнле лару-тăрура та илемлĕ те модăпа килĕшўллĕн пулма пулăшĕç.

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Лимонран хатĕрленĕ пудинг-кекс

**Çимĕç валли 240 грамм сахăр, 120 грамм çăнăх, çур чей кашăкĕ тăвар, 4 çăмарта, 15 грамм услам çу, 1 апат кашăкĕ лимон хуппи (цедра), 80 миллилитр лимон сĕткенĕ, 360 миллилитр сĕт кирлĕ.**

Духовкăна 175 градус таран хĕртмелле. Пĕр савăтра сахăра, çăнăха, тăвара, тепринче çăмарта саррине, услам çăва тата лимон хуппине пĕрлештермелле. Иккĕмĕш хутăша пĕчĕккĕнпĕчĕккĕн лимон сĕткенĕ хушса пăтратмалла. Унтан çăнăх хутăшĕ тата сĕт ерипен хушмалла. Хыççăн лăканă çăмарта шуррине ямалла. Чустана лайăх пăтратмалла. Темиçе пĕчĕк е пĕр пысăк формăна хумалла та духовкăна лартмалла. 40-45 минут тытмалла. Пиçсе тухсан кăштах сивĕтмелле те сахăр çăнăхĕ сапмалла.

Апачĕ тутлă пултăр!

## Тăпăрчă кукăлĕ

**Кукăль хатĕрлеме 750 грамм çăнăх, 4 çăмарта, 500 грамм тăпăрчă, 1 чей кашăкĕ чустана кăпăшкалатмалли порошок, 100 грамм услам çу, 50 грамм сахăр кирлĕ пулать.**

Савăта малтан çăмарта, тăпăрчăн пĕчĕк пайне, сахăра, унтан çемçетнĕ услам çу ярса пăтратмалла. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çăнăх хушмалла.

Юлнă тăпăрча сахăрпа тата çăмарта саррипе хутăштарса кашăкпа нимĕрлемелле.

Хатĕр чустана йĕтĕрлесе çўхетмелле. Çу сĕрнĕ тата ятарлă хут сарнă формăна хумалла. Чустана тикĕслемелле, вăл хăмпăланмалла мар. Çиеле тăпăрчă хурса тикĕслемелле. Ун çине кăпăкланиччен лаканă çăмарта шуррипе сахăра ямалла. Кукăле хĕртнĕ духовкăра писиччен тытмалла.

## Грекла хатĕрленĕ тутлă пулă

**Ку техĕмлĕ апат валли 700 грамм шăмминчен уйăрнă пулă, 3 помидор, 300 грамм сыр, 2 ыхра шăлĕ, 250 грамм майонез, çур лимон сĕткенĕ, ешĕл çимĕçсем (симĕс сухан, укроп, петрушка, базилик) кирлĕ.**

Пулла порцилĕх татăксене вакламалла та лимон сĕткенĕпе тата тăварпа пăтратса хумалла. Вĕтетнĕ ешĕл çимĕçсене, ыхрана, вĕтĕ туранă помидора, теркăпа хырнă 150 грамм сыра майонезпа пăтратмалла. Пулнă хутăшпа пулла хутăштармалла. Çу сĕрнĕ тимĕр ывăса (противень) хурса çиелтен юлнă сырпа сапмалла. 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра çур сехетлĕхе лартмалла.

## «Тартар» соус

**Соус хатĕрлеме хăвăра кирлĕ чухлĕ майонез, хăйма, пĕçернĕ çăмарта сарри, горчица, тăварланă хăяр илĕр.**

Хăймапа майонеза пĕр пек виçепе илсе хутăштарăр. Тĕпретнĕ çăмарта сарри, теркăпа хырнă хăяр, тăвар, горчица хушса пăтратăр. Тутлă соус хатĕр те!

*Нина ЦАРЫГИНА хатĕрленĕ.*

# Хаваслӑ 2015 самант



1. Кӑçалхи çул пӗлтерӗшӗ. 2. ... кӗперӗ. 3. Савӑт-сапа. 4. Зодиак палли. 5. Юшкӑн. 5. Çурт кӳлепи. 7. Ансӑр çул. 8. Х.Уяр романӗ. 9. Турат «çимӗçӗ». 10. Çулса хунӑ рет. 11. Вӗçме пӗлмен кайӑк. 12. Литвари хула. 13. Упӑте тӗсӗ. 14. Çӗвӗçӗн ӗç хатӗрӗ. 15. Сутуçӑна «пулӑшакан». 16. Пулӑ. 17. Ыйту çине хуравламалли бланк. 18. Хытӑ хут. 19. «Хура ылтӑн» турттаракан пӑрахут. 20. Хырӑнмалли хатӗр. 21. Венгр халӑхӗн ташши. 22. Якутсен эпосӗ. 23. Икерчӗн юлташӗ. 24. Вӑтам Азири «çапкаланчӑк». 25. Кӗвӗ терминӗ. 26. Пуçа тӑхӑнмалли япала. 27. Ют çӗршыв виçи. 28. М.Федоров хайланӑ баллада. 29. Казаксен пуçлӑхӗ. 30. Вӑл тахçан халӑх умӗнче ӑс парса çӳренӗ. 31. Кӗвӗ инструменчӗ. 32. Гоферӑн хваттерӗ. 33. Пысӑк флот. 34. Куян. 35. Хӗллехи уяв. 36. Чертеж тумалли хут. 37. Качака вӑййи.

## Кукӑр-макӑр çулпала Шав утатпӑр малалла



1. Килти кайӑк. 2. Пушӑ. 3. Кӗнеке çивӗтти. 4. Философи терминӗ. 5. Ӳнерçӗн ӗçӗ. 6. Чӑваш халӑх писателӗ. 7. Авалхи карап. 8. Юмахри карчӑкӑн «пуянлӑхӗ». 9. Виноград сорчӗ. 10. Кавказ тӑрӑхӗнчи юханшыв. 11. Хваттерти хурт-кӑпшанкӑ. 12. Ӗлӗкхи çар çынни. 13. Тӗнчери пӗрремӗш хӗрарӑм-космонавт.

## Сӑмахкаçмӑшсем



**Сылтӑмалла:** 8. Пахчаçимӗç. 9. Вӑрман кӑвакарчӑнӗ. 10. Вӑхӑта систерекен. 13. Уçлӑх музейӗ. 14. Авалхи карап. 16. Сусӑр çын. 17. Пуç пайӗ. 18. Чӑваш сӑвӑçи. 23. Икӗ вӗçлӗ япала. 24. Килти хур-кайӑк. 25. Помидор. 28. Пир тӗртмелли хатӗр. 29. Уçланкӑри ... (юрӑран). 30. Çӑпата хуçмалли хатӗр. 31. Çырма. 35. Хӑш-пӗр çынна унпа кӑнтӑрла шырасан та тупаймастӑн. 36. Тӗвесен ушкӑнӗ. 37. Йӳçӗ мар. 40. Унта Робинзон пурӑннӑ. 41. Зодиак палли. 42. Кӗвӗ инструменчӗ. 47. Кӗвӗçӳлӗх. 48. Ӗçе явӑçтарма пӗлекен. 50. Чӑвашрадиора ӗçлекен. 51. Пушӑ. 52. Çӗнӗ хуçан ӗç хатӗрӗ.

**Аялалла:** 1. Буратино «ашшӗ». 2. Р.Сарпин хайлавӗ. 3. Ӳсен-тӑрансен тӗнчи. 4. Выльӑх апачӗ. 5. Вӗçкӗн. 6. «Ешчӗк». 7. Чӳрече пайӗ. 11. Карттӑсен пуххи. 12. Балти тӑрӑхӗнчи çӗршыв. 15. Мӑйӑх юлташӗ. 19. Пушхирти тӗмӗ. 20. Чей вӗретмелли хатӗр. 21. Хурт-кӑпшанкӑ. 22. Кӑнтӑрти йывӑç. 26. Вӑл пилӗк авсан тухать. 27. Ӑна çӑмарти вӗрентме юрататать. 33. Ун тӑрӑх пӳрте кӗреççӗ. 33. Шыв юхтармалли хатӗр. 34. Пӗр чӗлхе тупма пултарни. 38. Ӑна урана тӑхӑнаççӗ. 39. «Хӗрлӗ автан». 43. Кӗлет. 44. Вӑл тухман çын тухсан тухать. 45. Пуçлӑх тенкелӗ. 46. Вӑрман çимӗçӗ. 49. Туратсен хӗллехи кӗрӗкӗ.

## Хӗвелçаврӑнӑш вӑрри Шӗкӗлчеме йывӑр-им?



1. Çар званийӗ. 2. Пӗрремӗш космонавт. 3. Юрӑçӑн сасси. 4. Чӑваш юрӑçи. 5. Кӑнтӑрти йывӑç. 6. Чӑваш çыравçи. 7. Вӑл «челюскинецсене» çӑлнӑ. 8. Пушкӑртсен хоккей команди «... Юлаев». 9. Пушӑ. 10. «Пусть говорят» телепередачӑна ертсе пыракан. 11. Вырӑс киноактерӗ. 12. Свитер. 13. Çывӑх çын. 14. Чӑваш композиторӗ. 15. Чӑваш боксерӗ, Олимп чемпионӗ. 16. Уралти хаклӑ йышши чул. 17. Кӗпер пайӗ. 18. Сирпӗтмелли хатӗр. 19. Унтан мӑсӑльмансене намаз тума чӗнеççӗ. 20. Юмахри Карабас-... 21. Инçет Хӗвелтухӑçӗнчи утрав. 22. Вырӑс космонавчӗ. 23. Вырӑс экономисчӗ, академик. 24. Ят-шыв палли. 25. Сылтӑм мар. 26. Хурт-кӑпшанкӑ. 27. Водород бомбин «ашшӗ». 28. Вырӑс генетикӗ, академик. 29. Тӗвесен ушкӑнӗ. 30. К.Маркс «пуянлӑхӗ».

***Николай КРАСНОВ*** (Йӗпреç районӗ) **хатӗрленӗ.**